ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Февраль 16 ШĂМАТКУН № 34 (8686)

Хакĕ 20 пус. 34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли уйăхлăх (1 стр.).
И. Бугаев.—Строительство планне ăнăçлă тултарассишĕн (1 стр.).
ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН СЕКРЕТАРĔСЕНЕ ПУЛĂШМА. В. Игнатьев.—Парти поручениĕ (2 стр.).
ПЫСĂК ТУХĂÇЛĂ ТЫРПУЛШĂН СОЦИАЛИЗМЛĂ АМĂРТĂВА АНЛĂ САРАР! К. Наманган.—Çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн; В. Андреев.—Вăйлă тырпулшăн тимлĕ кĕрешмелле (2 стр.).
РАЙОНТИ ХАÇАТСЕНЕ ПАХСА ТУХНИ. Парторганизацисен пурнăçне лайăх пĕлмелле, тĕплĕ çутатмалла (2 стр.).
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ. П. Семенов, И. Костин.—Ял Совечĕпе унăн депутачĕсем (3 стр.).
В. Куленко.—Çĕнĕ меслетсемпе усă курса (3 стр.).
КОЛХОЗ ПУРНĂÇĔН ЫЙТĂВĔСЕМ. И. Косминский. — Производство планĕсене тĕплĕ тумалла (3 стр.).
Монголи Халăх Республики Министрĕсен Совечĕ Чойбалсан маршала ĕмĕр асăнса пурăнмалла тăвас тесе йышăннă постановлени (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Суйлавçăсен наказĕсене куллен пурнăçламалла

Вырăнти Советсем хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Советсем халăхăн çывăх та тăван влаçĕ пулса тăраççĕ. Советсем,—тесе вĕрентнĕ аслă Ленин,—пуриншĕн те çывăх, ялан куç умĕнче ĕçлекен, халăха тивĕçлĕ, халăх ирĕкĕнчен тухса тăракан, чăн-чăн халăх массисен власть органĕсем. Совет влаçĕ—ĕççыннисен чи авторитетлă влаçĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ халăх Советсене вĕсĕмсĕр юратать, шанать, ĕçре пулăшса тăрать. Советсен вăйĕ—ĕççыннисемпе тачă çыхăнса, вĕсен творчествăллă пултарулăхĕпе пуçарулăхĕ çине таянса ĕçленинче.

Иртнĕ суйлавра ĕççыннисем хăйсен депутачĕсене чылай наказсемпе сĕнӳсем пачĕç. Вĕсене пурнăçласа вырăнти Советсем хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ.

1951 çулта ССР Союзĕн халăх хуçалăхĕ пысăк ӳсĕмсем турĕ. Промышленность валовăй продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмпе 103,5 процент тултарнă. Туса кăларакан продукци пахалăхĕ чылай лайăхланчĕ, унăн ассортименчĕ нумайланчĕ.

Социализмла ялхуçалăхĕ те палăрмалла çитĕнӳсем турĕ. Ялхуçалăхĕ 7 миллиард та 400 миллион пăт тĕштырă туса илчĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхĕ чылай ӳсрĕ. Колхозсемпе совхозсем хăватлă тракторсемпе комбайнсем тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай туянчĕç.

Чăваш АССР халăх хуçалăхĕ те иртнĕ çулта пысăк ӳсĕмсем турĕ. Партипе правительство ертсе пынипе республикăри хуçалăхпа культура строительстви малалла аталанса ӳсрĕ.

Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешесси—вырăнти Советсен пысăк тивĕçĕ. Ку тĕлĕшпе республикăри чылай район, хула, ял Совечĕсем паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Шупашкарпа Канаш хула Совечĕсем суйлавçăсен наказĕсемпе сĕнĕвĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе чылай çитĕнӳсем турĕ. Вĕсем хăйсен ĕç планĕсене суйлавçăсен наказĕсене шута илсе хатĕрлеççĕ, депутатсем ĕççыннисем умĕнче час-часах отчетсем туса параççĕ, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ял Совечĕсем хушшинче те çавăн пек ĕçлекеннисем сахал мар. Улатăр районĕнчи Иванькково-Удельновски, Етĕрне районĕнчи Стрелецки ял Совечĕ, Сĕнтĕр районĕнчи Мало-Карачкино ял Совечĕ суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртнерĕ. Уйрăмах Улатăр районĕнчи Иванькково-Удельновски ял Совечĕ суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласа ялăн сăн-сăпатне илемлетес, социализмлă çĕрĕç культурине хăпартас, культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе палăрмалла çитĕнӳсем турĕ. Организациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленипе ял Совечĕ хуçалăхпа культура строительствине малалла аталантарассишĕн куллен тăрăшса ĕçлет. Вăл республикăри ял Совечĕсен социализмла ăмăртăвĕнче малти вырăна тухнисенчен пĕри.

Иванькково-Удельновски ял Совечĕн депутачĕсем обществăллă ĕçре пысăк активлăх кăтартаççĕ, колхоз производствинче малта пыраççĕ. Ку ял Совечĕ кĕрекен «Победа» колхоз иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илчĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли минимума ăнăçлă тултарчĕ. Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласа, колхозра пĕлтĕр гидроэлектростанци турĕ. Исполком членĕсем, депутатсем ĕççыннисен куллен ӳсе пыракан культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн пĕтĕм пултарулăха хурса ĕçлеççĕ. Колхозра пин точкăллă радиоузел уçнă, халĕ колхозниксемпе колхозницăсем валли илемлĕ клуб хатĕрлеççĕ.

Анчах та республикăри хăшпĕр вырăнти Советсем суйлавçăсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн çителĕклĕ ĕçлемеççĕ, суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас ĕç çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Уйрăм депутатсем, хăйсене панă наказсене мĕнле пурнăçлани çинчен суйлавçăсем умĕнче отчетсем тумаççĕ. Сăмахран, Шăхасан район Совет исполкомĕ хуçалăхпа культура строительствине тивĕçлипе ертсе пымасть. Суйлав тапхăрĕнче Советсен тата исполкомсен ĕçне лайăхлатма чылай сĕнӳсем панă пулнă. Анчах та райсовет исполкомĕ çак наказсемпе сĕнӳсене шута илсе вĕсене пурнăçлассипе вĕсне çитермен, решени йышăннипе лăпланнă. Исполком ларăвĕсенче суйлавçăсен наказĕсене мĕнле пурнăçлани çинчен пĕр ыйту та лартман. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Атнаш, Аксăпурт Кипеч, Ухман ял Совечĕсем начар ĕçлеççĕ. Районти суту-илӳ организацийĕсен руководителĕсем те хăйсене панă наказсемпе сĕнӳсем çине чунсăррăн пăхаççĕ. Магазинсене вăхăтра уçмаççĕ, вĕсенче ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем çителĕксĕр. Анчах та райсовет исполкомĕ те суту-илӳ организацийĕсен руководителĕсем те ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Районти хăшпĕр ял Совечĕсем государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçламан, уйрăм колхозсем выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстермелли плана тултарман. Социализмлă çĕрĕç культурине хăпартассишĕн массăсен ĕçри хастарлăхне ертсе пымаççĕ.

Калинино район Совечĕ те суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлассишĕн çителĕксĕр ĕçлет. Ку ыйтăва райсовет исполкомĕ хăйĕн ларăвĕсенче вăра-хăсра çеç сӳтсе явать. Депутатсем, ялании комиссисем, Совет активĕ ял Совечĕсен ĕçне çителĕксĕр хутшăнаççĕ.

Суйлавçăсен наказĕсемпе сĕнĕвĕсене пурнăçласси вырăнти Советсен кулленхи тивĕçĕ. Сессисенче, исполком ларăвĕсенче наказсене тишкерсе пăхса тухса, вĕсене пурнăçлама тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, депутатсен ĕçри активлăхне ӳстерсе, суйлавçăсем умĕнче час-часах отчетсем туса пымалла. Советсен хăйсен организациллĕ-массăллă ĕçне тĕпрен лайăхлатмалла, суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлассишĕн пысăк хастарлăхпа ĕçлемелле.

— Суйлав округĕнчи суйлавçăсем мана чылай наказсем пачĕç. Вĕсене пурнăçлани çинчен эпĕ час-часах отчетсем тăватăп. Наказсене пурнăçласси манăн хисеплĕ те ответлă тивĕç,—тет Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ А. Старостин юлташ. Ку тĕрĕс сăмах. Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласси çине тимлĕн пăхмалла.

Депутат—халăх тарçи, тесе вĕрентет аслă Сталин. Халăх депутачĕсен хăйсене панă наказсене пурнăçлассишĕн куллен тăрăшмалла.

Советсен вăйĕ—массăсемпе тачă çыхăну тытнинче, вĕсен ĕçри хастарлăхне малалла аталантарса пынинче. Хуçалăхпа культура строительстви тĕлĕшпе тăракан задачăсене чыслă пурнăçлама ĕççыннисене куллен хавхалантарнинче.

Пирĕн республикăн хуçалăхĕпе культура строительстви кунсерен çĕнĕ çитĕнӳсем туса малалла аталанать. Колхозниксемпе колхозницăсен, рабочисемпе работницăсен тата совет интеллигенцийĕн политикăллă тата производствăллă активлăхĕ ӳсет. Вырăнти Советсен массăсен ĕçри çĕкленĕвне малалла ӳстерсе, организациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатса, умра тăракан хуçалăхлă-политикăллă задачăсене чыслă пурнăçлассишĕн большевикла кĕрешмелле.

Ăмăрту пуçаракансем патĕнче

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводра сменăри задание срокчен тултарассишĕн, смена вĕçлениччен планран ирттерсе продукци туса кăларассишĕн социализмлă ăмăрту кунтан-кун сарăлса пырать. Çĕнĕ юхăма тимĕрçĕ цехĕнче ĕçлекен рабочисем уйрăмах активлă хутшăнаççĕ. Ку цехра 230 çын ĕçлет. Вĕсенчен 200 çын ытла çĕнĕ обязательство йышăннă. Уйрăм рабочисем çеç мар, бригадăсем, сменăсем пĕтĕмĕшпе тухăçлăрах ĕçлеме сăмах параççĕ.

Февралĕн 11-мĕшĕнче тимĕрçĕ цехĕнчи Захаров мастер ертсе пыракан коллектив сменăри задание 7 сехетре тултарма социализмлă обязательство йышăннă. Коллектив хăй сăмахне чыслă пурнăçланă. План тăрăх 14 тонна тĕрлĕ детальсем туса кăлармалла пулсан, вăл 20,3 тонна туса кăларнă, сменăри задание 145 процент тултарнă. Сергеев, Новиков, Дюжев тимĕрçĕсем, Пчелкинпа Паранин прессовщиксем сменăри задание тăтăшах 5—6 сехетре тултараççĕ.

Рессорсемпе пружинăсем тăвакан тата йывăç касакалакан цехсенче чылай стахановецсем сменăри задание 6—6,5 сехетре тултараççĕ.

Патриотла ĕç пуçарса яракансем Семеновпа Слепцов юлташсем тата ытти стахановецсем паха тĕслĕх кăтартнине палăртас пулать. Вĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстермелли детальсен пахалăхне лайăхлатмалли çĕнĕрен те çĕнĕ меслетсем тупаççĕ. Халĕ вĕсем сменăри задание 6 сехетре пурнăçласа пыраççĕ.

Патриотла юхăма коммунистсем ертсе пыраççĕ. Вагонсем пухакан цехри мастер-коммунист Демьячков юлташ ертсе пыракан коллектив вагонсене нормăра кăтартниччен пĕр сехет хăвăртрах юсаса пĕтерет. Коммунист Чесов юлташ ертсе пыракан бригада 8 сехетри задание 6 сехетре пурнăçлать.

Завод дирекцийĕ сменăри задание срокчен тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва анлăрах сарма пулăшакан приказ çырса кăларчĕ. Цех начальникĕсене, инженерсемпе техниксене тата мастерсене социализмлă обязательство йышăннă рабочисем валли тухăçлă ĕçлеме лайăх майсем туса пама, малта пыракансен опытне пĕтĕçтерсе анлă сарма хушнă.

П. ХАРИТОНОВ.

Совет Союзĕ тăрăх

Мире сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕпе ССР Союзĕнчи писательсен Союзĕнче

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Венăра пулнă сессийĕ йышăннă тăрăх кăçалхи февралĕн 26-мĕшĕнче пур çĕршывсенче те Франци аслă писателĕ Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнине палăртаççĕ. Ку вăл—культура енĕпе тăвакан пысăк ĕç. Çакăн пек ĕçсем тунин тĕллевĕ пĕтĕм тĕнчери мире тĕреклетес шутпа халăхсем хушшинчи культурăллă çыхăнусене малалла аталантарса пырасси пулать.

Мире сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕпе Совет писателĕсен Союзĕ Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнине ССР Союзĕнче уявласа ирттерме Пĕтĕм Союзри комитет турĕ.

Пĕтĕм Союзри комитета çаксем кĕнĕ: А. А. Фадеев—СССР совет писателĕсен Союзĕн генеральнăй секретарĕ (комитет председателĕ), И. Г. Эренбург (комитет председателĕн заместителĕ), М. А. Шолохов—писатель, К. М. Симонов—«Литературная газета» хаçатăн главнăй редакторĕ, Микола Бажан—писатель (Украина ССР), Ә. Я. Сильгис—СССР халăх артисчĕ (Латви ССР), И. И. Анисимов—профессор, П. А. Капров—РСФСР Педагогика наукисен академийĕн президенчĕ, А. С. Исаакян—поэт (Армени ССР), А. А. Яблочкина—СССР халăх артистки, В. И. Пудовкин—кинорежиссер, А. А. Хорава—СССР халăх артисчĕ (Грузи ССР-ĕ), Т. Л. Щепкина-Куперник—СССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ.

Ялхуçалăхĕнчи механизаторсен коллективлă договорĕсем

Февралĕн 14-мĕшĕнче, Мускавра, машина-трактор станцийĕсенче тата çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ хăйĕн ĕçĕсене вĕçленĕ. Пленум 1951 çул валли тунă коллективлă договорсене пурнăçланин итогĕсем тата малашнехи задачăсем çинчен сӳтсе явнă.

СССР Ялхуçалăх министерствипе СССР Çĕр мамăк министерствин предприятийĕсенче иртнĕ çултанăкра 9.400 коллективлă договор тунă. Çавсене сӳтсе явнă чухне рабочисемпе специалистсен малашне тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пырас, социализмлă çĕрĕçĕнче ĕçлекенсен йăлана культура ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн тумаллине палăртса 80 пин ытла сĕнӳ панă. Хăйсен обязательствисене пурнăçласа, механизаторсем агрегатсемпе лайăхрах усă курма тăрăшнă. Трактористсен 40 пин бригади, Бунеев новатор примерĕ тăрăх ĕçлесе, тĕштырăпа техникăллă культурăсен тухăçлăхне ӳстерессишĕн, ĕç нормисене тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн ăнăçлă кĕрешнĕ. (ТАСС).

Малта пыракан сталеварсен паха пуçарăвĕ

(СССР Хура Металлурги министерствин коллегийĕнче)

Магнитогорскри Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕн 23-мĕш мартен цехĕнчи сталеварсем Панченко, Родичев, Худяков юлташсем, Савельевпа Рожков мастерсемпе пĕрле, шалти мĕнпур резервсемпе туллин усă курассишĕн тата производствăри тăкаксене пĕтерессишĕн социализмла ăмăртса ĕçлессине пуçарнă.

23-мĕш мартен кăмаки патĕнче ĕçлекен сталевар-стахановецсем хăйсен мĕнле майсем пуррине хисепе илсе тухнă. Кун хыççăн вĕсем 1952 çулта планран ирттерсе 10 пин тонна хурçă шăратса хатĕрлеме, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме, çултанăкра укçа-тенкĕпе пурлăха планран ирттерсе 500 пин тенкĕ перекетлеме сăмах панă.

Патриотла çĕнĕ юхăма пуçарнă сталеварсем—Панченко, Родичев тата Худяков юлташсем, хăйсен сăмахне пурнăçласа, январь уйăхĕнче планран ирттерсе 1.100 тонна, февраль уйăхĕн малтанхи 10 кунĕнче планран ирттерсе 715 тонна хурçă шăратса кăларнă.

Магнитогорскри металлурги комбинатĕнчи малта пыракан сталеварсем чĕнсе каланине Челябинскри, Златоустри, Уфалейри заводсенче тата Уралти ытти металлурги заводĕсенче ĕçлекенсем хапăл туса йышăннă.

Февралĕн 13-мĕшĕнче Магнитогорскри сталеварсен пуçарăвĕ çинчен Хура металлурги министерствин коллегийĕ сӳтсе явнă. Коллеги новаторсен пуçарăвне ырланă, предприяти руководителĕсене малта пыракан сталеварсен пуçарăвне хура металлургин пур отраслĕсенче те анлă сарма хушнă.

Коллегин çак ларăвĕнче «Запорожсталь» заводри Якименко сталеварăн пуçарăвĕ çинчен сӳтсе явнă. Якименко ĕçре пĕрмаях хурçăна хăвăрт шăратса кăлармалли меслетпе усă курассишĕн ăмăртса ĕçлессине пуçарнă. Çакна пурнăçласа пырас шутпа стахановец хурçă шăратакан производствăпа çыхăннă участоксемпе цехсенчи пур рабочисен, мастерсен, инженерсемпе техниксен ăмăртăвне пуçарма сĕннĕ.

1952 çулта сталеварсем пулса Якименко, Мартынов тата Небылицын юлташсем ĕçлекен 10-мĕш мартен кăмакин коллективĕ планран ирттерсе пĕлтĕрхи пек пин тонна мар, унтан та ытларах хурçă шăратса кăларма йышăннă.

Якименко юлташăн пуçарăвне «Запорожсталь» заводра, Сталинскри Сталин ячĕпе тăракан металлурги заводĕнче, Дзержинский ячĕпе, Петровский ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан заводсенче тата ытти предприятисенче хапăл туса йышăннă.

Хура металлурги министерствин коллегийĕ Якименко сталеварăн пуçарăвне ырланă, çав пуçарăва анлă сарма йышăннă. (ТАСС).

Большевиксен партийĕн историйĕнчи паллă куна уявланă

БАТУМИ, февралĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Батумири ĕççыннисем большевиксен партийĕн историйĕнчи паллă куна—Батуми хулинче Манташев заводĕнчи рабочисен пĕрремĕш пысăк забастовки пулнăранпа 50 çул тултарнине уявланă. Рабочисен забастовкине И. В. Сталин юлташ организацилесе ирттернĕ пулнă. Забастовка 1902 çулхи январĕн 31-мĕшĕнче (февралĕн 13-мĕшĕнче) пуçланнă.

Забастовка мĕнле пуçланни тата вăл мĕнле иртни çинчен ленинла «Искра» хаçат тĕплĕ çырнă. Батумири социал-демократсен организацийĕ ертсе пынă рабочисем, забастовка тăвакансем хăйсен интересĕсене хытă тӳтĕленине тата çирĕп тăнине палăртса, «Искра» хаçат çапла çырнă: «Полицейскисен чышкăсемпе тата салхаатсене хĕçне тытăнпă, 112 çынна тытса хунă. Çапах та рабочисем çирĕп тăнă; вĕсем юнаса хăратнинчен те шиклесе ӳкмен, хитре сăмахсем те вĕсене илĕртеймен, начар пурнăç пулни те вĕсен вăй-халне хавшатайман. Вĕсем хăйсен юлташĕсене ирĕке кăларичченех ĕçе тухмастпăр, тесе пĕлтернĕ».

Забастовка рабочисен çĕнтерĕвĕпе вĕçленнĕ. Администраци рабочисен ыйтăвне тивĕçтермелле пулнă. Арестленĕ рабочисене ирĕке кăларнă, ĕçрен кăларса янă рабочисене каялла ĕçе илнĕ.

Большевиксен партийĕн историйĕнчи паллă кун ячĕпе Батумири предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче калаçусем, докладсем, лекцисем ирттереççĕ. Хуларн аслă Сталин пурăнăçĕпе тата революциллĕ ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан вырăнсене курма çак кунсенче темиçе пин çын пырса кайнă.

Хабаровск хулине интервентсемпе белогвардеецсенчен ирĕке кăларнăранпа 30 çул тултарнă

ХАБАРОВСК, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Хабаровск хулине Американпа Япони интервенчĕсемпе белогвардеецсенчен ирĕке кăларнăранпа паян 30 çул тултарчĕ.

Крайри ĕççыннисем çак историллĕ куна уявлаççĕ. Клубсенче, культура çуртĕсенче тата библиотекăсенче выставкăсем организациленĕ.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче хула Инçет Хĕвелтухăçĕн индустриллĕ тата культурăллă пысăк центрĕ пулса тăнă. Хулара асфальт сарнă анлă та илемлĕ урамсем тунă, нумай хутлă çуртсем лартнă.

Сур ĕмĕр хушшинче хулара пĕтĕмпе те пысăк мар икĕ училище пулнă. Халĕ хулара пуян оборудованиллĕ 67 шкул, вĕсенче ĕççыннисен 40 пин ачи вĕренет. Хабаровскра врачсем, инженерсем, учительсем, строительсем, музыкантсем хатĕрлекен аслă шкулсемпе вăтам шкулсем 10 ытла. Студентсен хушшинче çурçĕрти халăхсен, нанай ĕрчетекенсен, пулăçсен тата сунарçăсен ачисем нумай.

Строительство планне ăнăçлă тултарассишĕн

„Чăвашстрой" трест коллективĕн патриотла чĕнĕвĕ

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви пирĕн республика хуçалăхĕпе халăх культурине ӳстерме пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем чăваш халăхĕшĕн сталинла тăрăшнине иртнĕ кĕркунне СССР Министрсен Совечĕпе РСФСР Министрсен Совечĕ пирĕн республикăна пулăшу парас тĕлĕшпе ятарласа постановленисем йышăннинчен уççăн курма пулать. Çав постановленисем тăрăх, предприятисем, культурăпа йăла учрежденийĕсем çĕнĕрен туса лартма тата киввисене çĕнетсе пысăклатма вуншар миллион тенкĕ укçа уйăрса параççĕ.

Кăçал Шупашкарти пир-авăр комбинатне тума 50 миллион тенкĕ, урăхла каласан, пĕлтĕрхинчен 2,5 хут ытларах укçа уйăрса панă. Пир-авăр тĕртекен фабрика валли пысăк çурт лартаççĕ. Рабочисем валли пурăнмалли çуртсем тума çеç 3,6 миллион тенкĕ укçа уйăрса панă. Кăçал «Чăвашстрой» трест пĕлтĕрхинчен 1,5 хут ытларах çĕнĕ çуртсем туса лартать.

Строительство ĕçĕсем çавăн пек пысăк хăвăртлăхпа ӳссе пыни хуларн партипе совет тата хуçалăх организацийĕсен ответлăхне темиçе хут хăпартать. Пысăк задачăсем тăраççĕ строительсем умĕнче. Государство çирĕплетсе панă плана пысăк пахалăхпа, вăхăтра пурнăçласси—кашни строительство организацийĕн, кашни рабочин чыслă тивĕçĕ.

«Чăвашстрой» трест коллективĕ, совет халăхĕ коммунизм строительствинче пысăк çитĕнӳсем тунипе хавхаланса, 1952 çулхи строительство планне срокчен тата ирттерсе тултарма социализмлă обязательство йышăнчĕ, республикăри строительство организацийĕсене ăмăртăва чĕнчĕ.

«Тăван çĕршыв экономикине малалла аталанни строительсем умне çĕнĕ, хисеплĕ задачăсем кăларса тăратать. Партипе правительство чăваш халăхĕшĕн сталинла тăрăшаççĕ, кăçал пирĕн республикăна капитальнăй ĕçсем тума каличчен никçан та пулман чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрса панă. Хамăр умра тăракан пысăк задачăсене чыслă пурнăçлас тесе, эпир 1952 çулхи строительство планне срокчен, декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарма, пур çуртсене те лайăх тума, механизмсене лайăх ĕçлеттерме, заводра тата мастерскойсенче строительство деталĕсем ытларах туса хатĕрлеме, Сталинла преми лауреачĕсем Щавлюгинпа Кутенков юлташсен паха меслетне анлă сарма, вырăнти хаклă мар материалсемпе ытларах усă курса тата ĕçе тĕрĕс йĕркелесе, 46 тонна цемент, 10 тонна тимĕр, 200 кубометр пĕрене, 1.500 килограмм олифа перекетлеме, май уйăхĕнче трестри рабочисем валли пĕр çĕнĕ çурт туса пĕтерме тата 100 çын валли общежити тумашкăн тытăнма, рабочисем вĕрентсе хатĕрлемелли плана 120 процент тултарма социализмлă обязательство йышăнатпăр», тесе йышăннă «Чăвашстрой» трестра ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем хăйсен решенийĕнче.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ «Чăвашстрой» трест коллективĕн патриотла пуçарăвне ырларĕ, хуларн стройкăсенчи парторганизацисене çак пуçару çинчен рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене тĕплĕ ăнлантарса пама, 1952 çулхи строительство планне срокчен тата пысăк пахалăхпа тултарассишĕн, механизмсемпе туллин усă курассишĕн, материалсем перекетлессишĕн, строительство хакне чакарассишĕн, малта пыракансен опытне сарассишĕн хăйсен коллективĕсенче социализмлă ăмăртăва анлă сарма сĕнчĕ.

И. БУГАЕВ,
ВКП(б) хула комитечĕн промышленноçпа транспорт пайĕн заведующийĕ.

Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли уйăхлăх

Пур колхозсем те уйăхлăха хутшăнчĕç

КАЛИНИНО, февралĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти колхозниксем Сталин юлташ патне янă çырура йышăннă обязательствăна чыслă пурнăçлассишĕн хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлеççĕ. ВКП(б) обкомĕпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ уйăхлăх ирттерессi çинчен сӳтсе явнă хыççăн колхозниксем çĕнĕ обязательство йышăнчĕç.

«Трактор» колхозран вăрманта 10 çын лавпа, 20 çын çуран ĕçлетчĕ. Уйăхлăха хутшăнса, ку колхозран тата çавăн чухлĕ çын тата лавсем вăрмана тухса кайрĕç. Сталин ячĕпе тăракан колхозран халĕ вăрманта 30 çын лавпа, 40 çын йывăç каснă çĕрте ĕçлет.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем йывăç касса хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарнă. Вĕсем уйăхлăх вăхăтĕнче каснă йывăçа турттарса кăлармалли плана 110 процентран кая мар тултарма сăмах пачĕç. «Волга» колхозпа Хрущев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем государство заданине Совет Çарĕн кунĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Районти пур колхозсем те вăрман хатĕрлевне хутшăнчĕç. Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парассишĕн, стахановла уйăхлăха çӳлĕ пусăмра ирттерессишĕн районти колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлă сарăлса пырать. **П. КРАСНОВ.**

Ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ

ХЕРЛĔ ЧУТАЙ, февралĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрманпромхоз коллективĕ стахановла уйăхлăха активлă хутшăнчĕ. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç касса хатĕрлемелли плана Совет Çарĕн кунĕ, каснă йывăçа турттарса кăлармалли плана—мартăн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма социализмлă обязательство йышăнчĕ. Пăравус машинисчĕ Долгов юлташ сезонти заданирен ирттерсе 2 пин фестметр йывăç турттарса кăларма сăмах пачĕ. Власовпа Завьялов машинистсем те çĕнĕ, пысăк обязательствăсем йышăнчĕç.

Стахановла уйăхлăх ирттересси, продукцин хăйне ларакан хакне чакарасси çинчен цехсенче рабочисемпе служащисен пĕрлехи пухăвĕсенче сӳтсе яврĕç. Вăрманпромхоз коллективĕ накладной расходсене чакарма, ĕçе юрăхлă йывăç планпа палăртниччен 15 процент ытларах кăларма пулчĕ.

Участоксемпе бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту кунтан-кун вăйланса пырать. Харитонов, Башкиров, Анисимов трактористсем ĕç нормине икшер хут ирттерсе тултараççĕ. Долговпа Власов машинистсем те тухăçлă ĕçлеççĕ. Çак кунсенче вăрманпромхозра йывăç хатĕрлесси чылай хăвăртланчĕ.

С. СТЕПАНОВ,
вăрманпромхоз директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

Плана мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн

КОМСОМОЛЬСКИ, февралĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрман хатĕрлемелли стахановла уйăхлăх ирттересси çинчен районти пур колхозсенче те сӳтсе яврĕç. Пухусенче колхозниксем хăйсем йышăннă социализмлă обязательствăна мĕнле пурнăçланине тишкерсе тухрĕç, ĕçе хăвăртлатмалли майсене палăртрĕç, Тăван çĕршыва планран ирттерсе йывăç ытларах хатĕрлесе пама сăмах пачĕç.

«Красная Звезда», «Дружба», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем государство заданине срокчен пурнăçланă. Вăрнар, Çĕмĕрле, Улатăр тата Пăрачкав районĕсенчи колхоз членĕсем тата Йĕпреç вăрманпромхоз коллективĕ çĕнĕ ĕç пуçарни çинчен сӳтсе явнă хыççăн вăрман хатĕрлемелли плана тултарнă колхоз членĕсем те уйăхлăха активлă хутшăнма йышăнчĕç. «Алга» колхоз членĕсем 3.500 кубометр вырăнне 3 723 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ. Апла пулин те чылай колхозниксем вăрмана тепĕр хут тухса кайрĕç.

«Красное Сормово» колхоз членĕсен пухăвĕ активлă иртнĕ. Уй-хир бригадирĕ Пудовкин юлташ вăрмана каякан колхозниксене ертсе пыма, колхоза çирĕплетсе панă задание мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах панă. Пуху хыççăн тепĕр кунне вăл колхозниксемпе пĕрле вăрмана тухса кайнă.

Районти колхозниксем Первомайски вăрманпромхозра йывăç касса хатĕрлемелли плана тултарчĕç. Улатăр вăрманпромхозĕнче тата 4 пин кубометр касса хатĕрлемелле. Районти партипе совет общественноçĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç хатĕрлемелли плана пĕтĕмĕшпе мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тултарма тĕллев лартрĕ.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн социализмлă ăмăртăва анлă сарар!

Вăйлă тырпулшăн тимлĕ кĕрешмелле

ОКТЯБРЬСКИ. Çак кунсенче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районти канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу пĕр ыйту: 1951 çулхи ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе малашнехи задачăсем çинчен райсовет исполкомĕн председателĕ Христофоров юлташ тунă доклада сӳтсе яврĕ.

Докладчик иртнĕ çулта районти колхозсем мĕнле ĕçлени çинчен тĕплĕн каласа панă хыççăн, хальхи вăхăтра çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинче нумай чарăнса тăчĕ. Чылай колхозсем çуракине халĕ те тивĕçлипе хатĕрленме тытăнман. «1-ое Мая», «Искра», «Дружба», «30 лет Чувашии» ялхуçалăх артелĕсенче паянхи куна çитсе те вăрлăхсене сортласа тасатас ĕçе кирлĕ пек тытăнман. Сортлă вăрлăх улăштарса илесси çителĕксĕр пырать. «Новый быт», «Дружба» колхозсем сортлă вăрлăх пĕр килограмм та улăштарса илмен. «Искра» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче уя тислĕк сахал кăларнă.

Нумай колхоз председателĕсем минераллă удобренисем тата нумай çул ӳсекен курăк вăррисем хатĕрлес ĕçе хакламассĕ. Кăçал государство минераллă удобренисем çителĕклĕ уйăрса панă. Анчах удобренисем кӳрсе килме «Звезда», «Волгарь», «Аниш» тата Винокуров ячĕпе тăракан колхозсемсĕр пуçне, урăх пĕр колхоз та тытăнман.

Пренире тухса калакансем тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем пирки паха сĕнӳсем пачĕç.

Канашлу участникĕсем «Звезда» колхоз председателĕ С. Яковлев юлташăн сăмахне уйрăмах пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Вăл пĕрлешнĕ «Звезда» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпул туса илессишĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн мĕнле майсемпе кĕрешни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

— Эпир,—тет вăл,—çĕре тĕрлĕрен удобренисемпе çемçететпĕр, агротехникăллă ытти ĕçсене те тăрăшса пурнăçлатпăр. Тăпрари йӳçĕке пĕтерме известь нумай хатĕрлерĕмĕр. Тĕрлĕрен минераллă удобренисем 100 тонна ытла кӳрсе килтĕмĕр, вĕсене татах та илсе килетпĕр. Пирĕн районти колхозсен çĕре удобренисемпе çемçетес тĕлĕшпе уйрăмах тăрăшса ĕçлемелле. Эпир халиччен тырпул тухăçлăхне хăпартас енĕпе ытти районсенчен кая юлса пыни вăл—совет агрономийĕ вĕрентнĕ пек ĕçлеме тăрăшманнинчен килнĕ. Мĕнпур майсемпе туллин усă курса, тырпул тухăçлăхне ӳстермелле, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине татăклăн вăйлатмалла.

«Волгарь» колхозри хăмла бригадин бригадирĕ Е. Петров юлташ пысăк тухăçлă хăмла туса илни çинчен каласа пачĕ. Унăн бригади иртнĕ çул кашни гектартан 11-шер центнер пĕрремĕш сортлă хăмла пухса кĕртнĕ. Хăмла тухăçлăхне ӳстерес тесе, бригада тислĕкрен компост хатĕрленĕ. Çав паха техникăллă культурăн тухăçлăхне татах та ытларах ӳстерме май пур. Анчах та «Росхмель» кантурĕ пире, хăмла тăвакансене, çителĕксĕр пулăшать. Эпир хăмла ĕçĕн агротехникипе тĕплĕнрех паллашасшăн, «Росхмель» кантурĕ вара пире кирлĕ литература тупса пама тăрăшмасть.

МТС механикĕ Дверинин юлташ выльăх-чĕрлĕх фермисенчи ĕçсене механизацилес пирки ыйту хускатрĕ. Пренире тухса калакан ытти юлташсем те лайăх сĕнӳсем пачĕç.

Канашлу 1952 çулта вăйлă тырпул туса илме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма социализмлă обязательство йышăнчĕ.

В. АНДРЕЕВ.

Çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

ÇĔРПУ. Февралĕн 12-мĕшĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районти канашлăвне 227 çын пухăнчĕ. Унта 1951 ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсен итогĕсемпе 1952 çулхи задачăсем çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Д. Кирпичев юлташ доклад туса пачĕ.

Канашлу пысăк активлăхпа иртрĕ. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем хăйсен опычĕ çинчен тĕплĕн каласа панине пĕрлех, районти организацисем умне сивĕч ыйтусем кăлара-кăлара тăратрĕç. Вĕсем колхозсене тата бригадăсене агрономсем çителĕксĕр пулăшнине, вăйлă тырпул çитĕнтерме тата обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерме агрономсемпе зоотехниксен халĕ уйрăмах хытă тăрăшса ĕçлеме кирлине кăтартса пачĕç. Çавăн пекех МТС колхозсене тивĕçлипе пулăшу паманнине хытă астутарчĕç.

Районти колхозсем иртнĕ çул тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе чылай тăрăшса ĕçленĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 297 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кашни гектартан 20,6-шар центнер тырă пухса кĕртнĕ. Çавăн пекех «Коммунар», Мичурин ячĕпе тăракан, «Новая жизнь» колхозсенче те тырăпа çуртри пысăк тухăçлă пулнă.

Канашлура пулнисем государство селекци станцийĕнчи доярка Антонина Ефимова юлташ хăйĕн ĕçĕ çинчен каласа панине питĕ тимлĕ итлерĕç.

— Ĕнесенчен нумайрах сĕт суса илесси доярккăсенчен нумай килет,—тет вăл.—Кашни ĕнене пĕлни, кашнине хăйне кирлĕ пек тăрантарни, пăхни—ун чухне сĕт ытларах суса илме май парать. 1951 çулта апĕ хăма çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 4.259-шар килограмм сĕт суса илтĕм. Уйрăм, ĕнесем, сăмахран, «Телочка» çулталăкра 5.288 килограмм, «Лимфа»—5.433 килограмм, «Комета»—5.680 килограмм сĕт панă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Мичурин ячĕпе тăракан колхоз пысăк çитĕнӳ турĕ. Фермăсенче выльăх-чĕрлĕх усрамалли минимума тултарнă май, кăçал колхозниксем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе 10 процент сăмалăх илессĕ. Фермăсен заведующийĕ коммунист И. Гурьев юлташ выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплетнĕ, вĕсене пулăшса пырать.

— Эпир,—тесе каласа кăтартать вăл,—выльăхсене чӳптăрас ĕçе лайăх йĕркелеме тăрăшатпăр. Çавна пула ĕнесем кĕсĕр юлмассĕ. Кăçал, çĕнĕ çулта пуçласа, пирĕн фермăра 15 ĕне пăруларĕ. Талăкра халĕ эпир 48 ĕнерен вăтам шутпа 350 литр ытла сĕт суса илетпĕр.

Колхоз выльăхсем валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ. Витесене водопровод кĕртнĕ тата электричество çутатать.

Çавăн пекех канашлура пулнисем Сталин ячĕпе тăракан колхозри пĕррремĕш бригадăн бригадирĕ Любовь Тихонова каласа панине интересленсе итлерĕç.

Любовь Тихонова бригадирта 11 çул ĕçлет. Колхоз председателĕ агроном В. Орлов юлташ (халĕ вăл ялхуçалăх наукисен кандидачĕн ятне илме диссертаци хатĕрлет) ăна куллен пулăшса пырать. Иртнĕ çул Тихонова юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади 70 гектар çĕр лаптăкĕ çинчен кашни гектартан 25,6-шар центнер тырă туса илнĕ.

— Çавăн чухлĕ тырра эпир мĕнле майпа илме пултартăмăр-ха,—тет Тихонова юлташ.—Агротехника правилисене пурнăçласа пынипе турăмăр ăна. Çĕртмене вăхăтра туса хăвартăмăр, кашни гектар çине 25-шер тонна тислĕк кăлартăмăр, икĕ хут культиваци турăмăр тата трактор сеялкипе акса хăвартăмăр. Хĕлле кашни гектар çинчех юр тытрăмăр. Сурхуне, юр ирĕлнĕ хыççăн, калчана минераллă удобренисемпе, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апатлантартăмăр.

Бригадăри колхозниксем иртнĕ çулхи ăнăçлă ĕçсемпе çырлахмассĕ, вĕсем кăçал татах та ытларах тырă туса илме тăрăшассĕ. Халĕ 150 гектар çинче юр тытнă, 250 тонна тислĕк кăларнă, 30 центнер кĕл, çавăн пекех выранти ытти удобренисем нумай пухнă, 60 тонна минераллă удобренисем кӳрсе килнĕ. Плугсене, сеялкăсене юсанă, вăрлăхсене тасатса акма юрăхлă тунă.

Канашлура пулнисем кăçал тырпул тухăçлăхне ӳстерме, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне хăпартма обязательствăсем йышăнчĕç. Кăçал районти колхозсем вăтам шутпа кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă, çав шутран ырăш 110-шар пăт туса илме сăмах пачĕç. Сталин ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан ырăш 150-шар пăт, кĕрхи тулă 130-шар пăт, çурхи тулă 120-шер пăт илме, çав колхозри Тихонова юлташ ертсе пыракан бригада 35 гектар çинче кашни гектартан 210-шар пăтран кая мар ырăш тата хăйне çирĕплетсе панă мĕнпур çĕр лаптăкĕ çинчи кашни гектартан 180-шар пăт ырăш туса илме обязательство йышăнчĕç.

Çавăн пекех канашлу выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерме, тырпула кĕске вăхăтра пухса кĕртме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана срокчен тултарма обязательство илчĕ.

К. НАМАНГАН.

Механизаторсем тухăçлăрах ĕçлеме пулаççĕ

ИШЛЕЙ, февралĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ра ĕçлекенсен республикăра лайăх ĕçлекен механизаторсен чĕнĕвне пĕр шухăш-кăмăллă пулса ырласа йышăнчĕç. Трактор бригадисен бригадирĕсем, трактористсем, комбайнерсем, социализмла ăмăртса ĕçлесе пысăкрах çитĕнӳсем тума сăмах параççĕ.

Г. Романов юлташ ертсе пыракан трактор бригади СХТЗ тракторпа 800 гектар, ДТ-54 тракторпа—1.200 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тума обязательство илчĕ. П. Матросов юлташ ертсе пыракан 9-мĕш бригадăри трактористсем СХТЗ тракторпа 750 гектар, НАТИ тракторпа—1.100 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тума пулчĕç. 1-мĕш трактор бригади те машинăсемпе тухăçлă ĕçлеме, «За коммунизм» колхозра кашни гектартан 14-шар центнертан кая мар тырпул туса илессишĕн кĕрешме сăмах пачĕ.

Уйрăм механизаторсем тата пысăкрах обязательствăсем илессĕ. Н. Бычкова А. Бычков юлташсем хăйсем ĕçлекен тракторпа 1.000 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тума пулчĕç.

Механизаторсем вăйлă тырпул туса илес шутпа уй-хир бригадисене тачă çыхăнса ĕçлемелле. МТС-па колхозсем хушшинчи договора икĕ енчен те çирĕп пурнăçласа пымаллине кăтартса хăварчĕç.

МТС коллективĕ тракторсене правительство кăтартнă срокчен лайăх юсаса пĕтерессишĕн тăрăшать.

В. МАЛЫШЕВ,
МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

Чăвашла кинокартинăна юратса пăхаççĕ

ЕЛЧĔК. «Хăюллă çынсем» («Смелые люди») ятлă чăвашла куçарнă кинокартинăна районти ĕçсыннисем пысăк хавасланса кĕтсе илчĕç.

Çак кинокартинăна Елчĕкре кăтартнă чухне район центрĕнчи служащисемпе рабочисем, интеллигенци, колхозниксем нумай пулчĕç. Кино куракансем кинокартинăна чăвашла куçарнине ырлаççĕ, совет çыннисен патриотла ĕçĕсем çинчен калакан фильма тăван чĕлхепе итлесе пăхмашкăн тунăшăн савăнаççĕ.

Район центрĕнче кăтартнă хыççăн, кинокартинăна районти ытти ялсенче кăтартма тытăнчĕç.

Н. НИКИТИН.

Н. В. Гоголе асăнса

Лекци-концертсем

Чăваш государство филармонийĕ вырăссен аслă писателĕ Николай Васильевич Гогль вилнĕренпе 100 çул çитнĕ май лекци-концертсем ирттерет.

Чăваш государство юрăпа ташă ансамблĕ радиоинформаци комитечĕн хор коллективĕпе пĕрле Гоголь произведенийĕсем тăрăх Чайковский çырнă «Черевички» оперăн, Римский-Корсаковăн «Сорочинская ярмарка» оперин сыпăкĕсене хатĕрлет.

Симфони оркестрĕ «Майская ночь или утопленница», «Сорочинская ярмарка» оперăсенчен илнĕ увертюрăсене вĕренет. Оперăри арисене, уйрăм сыпăксене филармони солисчĕсем И. Болентьев, И. Охливанкин, Т. Патрикеева юлташсем юрласа парӑççĕ.

«Гоголь музыкăра» тема тăрăх ирттерекен лекци-концертсем февралĕн 26-мĕшĕнче филармони залĕнче пуçланаççĕ. Лекцисене Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Ф. М. Лукин ирттерет.

Н. В. Гоголе асăнса ирттерекен лекци-концертсем ялхуçалăх институтĕнче, Чапаевски поселокра, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра, республикăри хăшпĕр район центрĕсенче те пулассĕ.

П. МЕДНИКОВ.

Шкул ачисем совет воинĕсемпе çыхăну тытаççĕ

ВĂРНАР. Уравăшри вăтам шкулта вĕренекен пионерсене шкул ачисем совет воинĕсемпе çыхăну тытассĕ, тăтăшах çырусем ярса илессĕ. Шкул ачисем воинсене хăйсем мĕнле вĕренни, шкулти кружоксем мĕнле ĕçлени, çăвсене пыракан колхозăн ял тата ытти çинчен те çырса тăрассĕ.

Шкул ачисене совет воинĕсем хушшинчи туслăх çирĕпленсех пырать. Воинсем шкул ачисене çар дисциплини çинчен, боевой тата политикăллă вĕренĕве ӳстерессишĕн мĕн-каçни тăрăшса ĕçлени çинчен çырса пĕлтерессĕ. Шкул ачисене лайăх вĕренме тата çирĕп дисциплинăллă пулма ырă сунассĕ. Г. Запасов краснофлотец шкул ачисем патне çапла çырать:

«Эпир, совет воинĕсем, Тăван çĕршыва çĕр çинче те, сывлăшра та, тинĕсре те çирĕп сыхласа тăратпăр. Совет халăхĕн мирлĕ ĕçне тĕрек никам та силлеймĕ. Сире тата лайăхрах вĕренме, Тăван çĕршыва хĕрӳллĕ юратакан патриотсем пулса ӳсме ырă сунатпăр».

Халĕ, Совет Çарĕн кунне ирттерме хатĕрленнĕ май, шкул ачисем воинсен çырăвĕсене пĕрлештсе вулассĕ.

Е. ЗАХАРОВ.

Районти хаçатсене пăхса тухни

Парторганизаци пурнăçне лайăх пĕлмелле, тĕплĕ çутатмалла

Партин Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви пирĕн республика умне лартнă задачăсене ăнăçлă пурнăçламалла тăвас тесе, ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ промышленноçпа ялхуçалăхне тата культура строительствине аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тума палăртрĕ. Кунпа пĕрлех пленум парти комитечĕсемпе пуçламăш парторганизацисен ертсе пырас рольне ӳстерме кирлине палăртрĕ.

Хуçалăхпа культура строительствинчи çитĕнӳсем пысăк та çирĕп пуласси партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçе çулĕ пусăма çĕкленнинчен килет. Çавăн чухне кăна партин вырăнти организацийĕсем коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пирĕн республикăна панă заданисене пурнăçа кĕртес ĕçе большевикла организацилесе ертсе пыма пултарассĕ.

Ĕç мелĕсене çĕнетсе тата лайăхлатса пыма парторганизацисене куллен пулăшасси пирĕн хаçатсен пархатарлă тивĕçĕ пулса тăрать.

Районсенчи уйрăм хаçатсем пуçламăш парторганизацисен пурнăçне тĕплĕрех çутатса пыма тăрăшассĕ. Чылай хаçатсен страницисенче «Парти пурнăçĕ» пайне час-часах курма пулать, унта пичетленекен материалсен тематики те анлăланчĕ. Парторганизаци секретарĕсен, парти активĕн тата уйрăм коммунистсен çырăвĕсене час-часах пичетлессĕ.

«Коммунизм çулĕпе» хаçат (Красноармейски районĕ, редакторĕ Н. Орлов юлташ) районти парторганизаци пурнăçне анлăн кăтартса пама тăрăшать. Кăçал тухнă малтанхи ултă номерте колхозсенчи парторганизацисен ĕçĕсем çинчен сичĕ çыру пичетленĕ. Редакци парторганизацисен нумай енлĕ ĕçне кăтартса парасшăн, парторганизацисенче большевикла критикăпа самокритикăна сарса пырасшăн.

Кăçал тухнă пур номерсенче те тенĕ пекех **«Колхоз ялавĕ»** хаçат (Елчĕк районĕ, редакторĕ В. Наумов юлташ) пуçламăш парторганизаци пурнăçĕнчи пысăк ыйтусене чылайăшне çутатса парать. «Марс» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ С. Галеев юлташ агитаторсен ĕçне ертсе пыни çинчен, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ И. Измин юлташ республикăра малта пыракан колхозсен опытне пропагандăлас ĕçе йĕркелени çинчен каласа параççĕ. Хаçат марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшакан консультантсен, комсомол тата пионер организацийĕсен, стена хаçачĕсен ĕçĕсем çинчен, шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатасси çинчен вырăнти авторсен çырăвĕсене пичетлет.

Анчах нумай районсенчи хаçатсем парторганизацисен пурнăçне начар çутатассĕ. **«Çĕнтерӳ çулĕ»** хаçат (Хĕрлĕ Чутай районĕ, редакторĕ А. Шинжаев юлташ) мĕн юлашки кунччченех пуçламăш парторганизацисен пурнăçне çутатас ĕç çине кирлĕ пек пăхмасть. Вăл райком пленумĕ е актив пухăвĕ, тĕрлĕ канашлусем çинчен отчетсем паниппех çырлахать. Редакци колхозсенчи, машина-трактор станцийĕнчи пуçламăш парторганизацисемпе, партбюросемпе, партгруппăсемпе, парти активĕпе çыхăну тытмасть пулас. Çавăнпа унăн парти строительстви енĕпе çыракан авторсем çук.

«Большевикла колхозшăн» хаçат та (Тăвай районĕ, редакторĕ Е. Сверчкова юлташ) парторганизаци пурнăçне начар çутатать. Ку хаçатра «Парти пурнăçĕ» пайĕ çукпа пĕрех. Сайра-хутра пичетленекен материалсен пахалăхĕ пысăк мар, содержани тĕлĕшĕнчен вăйсăр. Хаçат страницисенче парторганизацисен опытне курма çук.

Пуçламăш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. «Социализм çулĕпе» хаçат (Вăрнар районĕ, редакторĕ Е. Волков юлташ) çакăн çинчен çырмарĕ. Хаçат юлашки виçĕ уйăх хушшинче колхозри парторганизацисен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен пĕр материал та пичетлемерĕ.

Чылай хаçатсен «Парти пурнăçĕ» пайĕнче пичетленĕ материалĕсене хуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх çырнă çырусенчен уйăрса илме питех те хĕн. Редакцисенчи уйрăм работниксем парторганизацисен ĕçĕсем çине критикăлла пăхмассĕ, çавна пула вара хăшпĕр çĕрте большевикла ертсе пырас ĕçĕн мелĕсене пăснине курмассĕ. Сăмахран, пуçламăш парторганизаци çуракине хатĕрленес ĕçе ертсе пыни çинчен çырнă материалсенче хаçатсем удобрени турттарма, юр тытма, машинăсене юсама, çавнашкал ытти ĕçсене тума коммунистсене уйăрнине кăтартса параççĕ. Урăхла каласан, колхоз правленийĕ тӳрремĕн тумалли ĕçсене парторганизацисем хăйсем çине илнине асăрхамассĕ.

Хăшпĕр хаçатсен уйрăм статьисем пуçламăш парторганизацисене хуçалăх ыйтăвĕсемпе ытларах ĕçлес çул çине пăрса ярассĕ. Колхоз е МТС руководителĕсен, колхозри ытти кадрсен ответлăхне ӳстерес ĕçре парторганизацисене пулăшас вырăнне, хаçатсем хуçалăхри пĕтĕм çитменлĕхсемшĕн ответлăха парторганизаци секретарĕсем çине йăвантараççĕ. Пăллах, парторганизаци хуçалăхпа культура строительствинчи пĕтĕм ĕçе ертсе пырать. Çак ĕçе вăл кадрсен ответлăхне ӳстернипе, кадрсене большевикла воспитани панипе, вĕсен пултарулăхне тата пуçарулăхне пĕрмай вăйлатса пынипе, массăсене государство заданийĕсене пурнăçлама пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме вĕрентнипе туса пырать.

ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ партин органĕсемпе пуçламăш парторганизацисем хуçалăхлă ĕçсене партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă ĕçсемпе тачă çыхăнтарса туса пыма вĕренсе çитменнине палăртрĕ. Çак çитменлĕхе хăвăртрах пĕтерме парторганизацисене пулăшасси хаçатсен пысăк задачи пулса тăрать. «Парти пурнăçĕ» пайĕнче парторганизацисем коммунистсене хуçалăхри ответлă участоксене тĕрĕс вырнаçтарса тухас тĕлĕшпе, колхозниксемпе колхозницăсене коммунизмла воспитани парас тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине, парторганизацине массăсем хушшинчи çыхăну куллен çирĕпленсе пынине, пуçламăш парторганизацисем хуçалăхпа культура строительствине мĕнле ертсе пынине тарăннăн çутатса пырас пулать.

Çавăн пек тăвас тесен, партин ертсе пыракан работникĕсене, парти активне тата коммунистсен анлă массине хаçат ĕçне ытларах хутшăнтарни, редакцисем парторганизацисен пурнăçне тĕплĕн цĕлсе тăни кирлĕ.

Парторганизацисен секретарĕсене пулăшма

ПАРТИ ПОРУЧЕНИЙĔ

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ парти органĕсем умне лартнă чи кирлĕ задачăсенчен пĕри вăл пур коммунистсене те парти ĕçне анлă явăçтарасси пулать.

Коммунистсене парти порученийĕсем пани вĕсен активлăхне ӳстермелли лайăх меслет пулса тăрать. Парти порученине пурнăçласа, коммунистсем хăйсен пултарулăхне палăртассĕ, коммунизм обществи тăвассишĕн пыракан аслă кĕрешĕве хутшăнассĕ. ĕçре большевикла пиçĕхсе пырассĕ, массăсем хушшинче организациллĕ ĕç тума хăнăхассĕ.

Парти организацийĕсен составĕ яланах пĕр пек пулмасть. Пурнăçри опыт, партире тăнă стаж, пĕлӳ тĕлĕшĕнчен коммунистсем тĕрлĕрен пулассĕ. Çавăнпа та парти порученийĕсем панă чухне кашни коммунистăн пултарулăхне тата кăмăлĕпе туртăмне шута илмелле. Парти порученийĕ коммунистăн идейăллă-политикăллă пĕлĕвне хăпартма, унăн организаторла хăнăхăвне аталантарма, большевикла пултарулăхне ӳстерме пулăштăр.

Парторганизацисен хăшпĕр руководителĕсем çапла шутлаççĕ: *коммунистсем нумай, поручениcем сахал*, çавăнпа та парторганизаци членĕсенчен пĕр пайĕ поручениcĕр тăрса юлать, теççĕ. Сăмахран, хăшпĕр парторганизацисенче темиçе агитатора, стена хаçат редакторне, кружок руководительне уйăраççĕ те, коммунистсене пама урăх порученисем тупаймаççĕ.

Партиллĕ ĕç нумай енлĕ. Пуçламăш парторганизацисенче коммунистсене обществăллă-политикăллă ĕçе активлă явăçтармалли майсем сахал мар. Социализмлă ăмăрту организацилес, ялхуçалăхĕнче, промышленноçра малта пыракансен опытне сарас, ĕçре тĕл пулнă йывăрлăхсене çĕнтерес тĕлĕшпе кашни коммунист хăйĕн пуçарулăхне палăртма пултарать. Çаксем вĕсем пурте партиллĕ-организациллĕ тата пропаганда ĕçĕн уйрăлми пайĕ пулаççĕ. Уйрăм тĕслĕхсем илĕпĕр.

Кĕркуннене хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрленĕ тапхăрта Вăрнар районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци Я. Васильев юлташа вăрмана кайма, унта колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе организацилеме хушнă.

Васильев юлташ колхоз государство планне тултаричченех вăрмантан тухмасăр ĕçленĕ. Чи малтан, вăл хăй лайăх тĕслĕх кăтартнă, колхозниксемпе куллен калаçусем ирттернĕ, вĕсене кашни минутпа усă курма, плана срокчен тултарассишĕн мĕнпур вăйпа кĕрешме мобилизациленĕ.

Колхоз плана срокчен чылай малтан тултарнă, ушăн ăна хаклă парнепе премиленĕ. Çапла ĕнтĕ. Васильев юлташ парторганизаци хушнă ĕçе лайăх тунă, массăсене организацилеме вĕреннĕ.

Çав районтах Ленин ячĕпе тăракан колхозри пĕр фермăра ĕç начарланса пынă пулнă. Пуçламăш парторганизаци сĕннипе, колхоз правленийĕ çав фермăра яланлăха ĕçлеме Т. Васильев коммуниста уйăрнă. Васильев юлташ мĕнпур работниксене фермăри ĕçе лайăхлатма хавхалантарнă, ăнлантарулă ĕçе лайăх организациленĕ. Коммунист тăрăшнипе колхоз сысна ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана ăнăçлă тултарнă, сыснасене пăхас ĕçе тĕпренех лайăхлатнă. Васильев юлташ халĕ ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Парти порученине пурнăçлани ăна колхозри ответлă руководитель таран ӳсме пулăшнă.

Çак тĕслĕхсем вĕсем кирек хăш ĕç те пирĕн çынсене ӳсме тата пиçĕхме май панине кăтартса параççĕ. Анчах хăшпĕр çĕрте çакăн çинчен манаççĕ.

Тăвай районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизацинче 22 коммунист, вĕсенчен улттăшне çеç поручени панă, ыттисене партиллĕ ĕçе пĕртте явăçтарман. Поручени илнĕ коммунистсенчен хăшăрисем ăна мĕнле пурнăçламаллине те пĕлмеççĕ, вĕсене ку тĕлĕшпе пулăшмаççĕ. Çав районтах «25 Октября» колхозра 10 коммунистран 3 çыннăн нимĕнле поручени те çук. П. Лазин, Ф. Муканов, Н. Ерасов коммунистсем иртнĕ çултанпах парторганизаци ĕçне хутшăнмаççĕ, П. Лазин юлташ парти пухăвĕсене çӳреме, членсен укçи тӳлеме, политкружок занятийĕсене çӳреме пăрахнă.

Çакă вăл коммунистсене воспитани парас ĕçе ячĕшĕн çеç туса пынинчен, коммунистсемпе ĕçлеменнинчен, вĕсен лайăх е начар енĕсене пĕлменнинчен, умра тăракан задачăсене пурнăçлас ĕçре коммунистсен вăйĕпе тата пуçарулăхĕпе усă курманнинчен килнĕ.

Хăшпĕр çĕрте коммуниста поручени параççĕ те, вăл ăна мĕнле пурнăçланипе интересленмеççĕ, йывăр килнĕ самантра пулăшмаççĕ, кăтартса памаççĕ. Е тата пĕр-пĕр коммунист, унăн ĕçне никам та тĕрĕслеменнине курса, ку ĕç никама та кирлĕ мар тесе, поручене пурнăçлама пăрахать. Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизацинче 24 коммунист. Вĕсене порученисем параççĕ, анчах парторганизаци хушнă ĕçе мĕнле пурнăçланипе никам та интересленмест. Ку парторганизацинче коммунист партпорученисене мĕнле пурнăçлани çинчен 1951 çулта пĕрре те сӳтсе явман. Çакăнтан килĕ те ĕнтĕ унта хăшпĕр коммунистсем парторганизаци ĕçне хутшăнма пăрахни.

Парторганизаци хушнă ĕçе мĕнле тунине парторганизаци секретарĕ, партбюро членĕсем, партгрупорг куллен тĕрĕслесен, коммунистсен ĕçĕнче мĕнле çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем пуррине вăхăтра пĕлсе тăрсан, ĕçпе тата канашпа пулăшсан çеç парти порученийĕсем коммунистсене воспитани памалли чăн-чăн хăватлă меслет пулма, коммунистсен пуçарулăхне ӳстерме пултарассĕ.

Парти порученийĕсене мĕнле пурнăçланине куллен тĕрĕслес тесен, пуçламăш *парторганизаци секретарĕн кама мĕнле ĕç* паннине шута илсе пымалла. Ку тĕлĕшпе уйăх дневник тумалла. Коммунистсене парторганизаци планĕ тăрăх, парти пухăвĕн решенийĕ тăрăх е ахаль сăмахпа паракан порученисем çинчен çав дневника çырса хумалла. Ку вăл, пĕр енчен, учет тума, теприн енчен, панă порученисене анализ тума кирлĕ. Хăшпĕр чухне çапла та пулать. Пур коммунистсене те поручени панă, анчах хăшĕ мĕнле ĕç илнине тата ăна мĕнле пурнăçланине шута илмессĕ, çапла вара парторганизаци секретарĕ уйрăм коммунистсен ĕçĕ çинчен тĕплĕн пĕлмест.

Коммунистсене яланлăх порученисем панипе кăна çырлахмалла мар. Кунпа пĕрлех вĕсене уйрăм тапхăрта тумалли ĕçсем памалла, сăмахран, çĕнĕ хаçат-журналсенчи материалсем тăрăх калаçусем, докладсемпе лекцисем ирттерме, колхоз хуçалăхĕн уйрăм отраслĕсен ĕçне тĕрĕслеме, пухура сӳтсе явмалли ыйтусене хатĕрлеме поручени памалла.

Канаш районĕнчи Горкин ячĕпе тăракан колхозри 14 коммуниста пурне те тĕрлĕ порученисем панă. Нумаях та пулмасть, парторганизаци пухăвĕнче колхозри фермăсенче выльăх-чĕрлĕхе мĕнле пăхни çинчен сӳтсе явнă. Парторганизаци секретарĕ Н. Гаврилов, Е. Дубровин, В. Козлов коммунистсене выльăх-чĕрлĕх фермисенчи ĕçе тĕрĕслеме, унти работниксемпе калаçусем ирттерме поручени панă.

Асăннă коммунистсем ку поручение тӳррĕн пурнăçланă, ферма работникĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене уçса палăртма, парти пухăвĕнче тĕплĕ решени йышăнма пулăшнă. Çак парторганизацинчи *виçĕ коммунист—политкружок* руководителĕсем, пĕри—стена хаçат редакторĕ, тăваттăшĕ—агитаторсем пулса ĕçлессĕ, *ыттисен те кашниннех тĕрлĕ порученисем* пур. Парторганизаци секретарĕ кашни коммуниста партиллĕ ĕçе активлă явăçтарать.

Иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕсенче чылай çĕрте пуçламăш парторганизаци секретарĕсем пулма çĕнĕ юлташсене суйланă. Ку коммунистсем—пирĕн çамрăк кадрсем, чылайăшĕн партиллĕ ĕçе ертсе пыма опыт çитмест. Çамрăк секретарьсене воспитани парасси, партиллĕ ĕçе вĕрентесси çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен парторганизацисен çĕнĕ секретарĕсене воспитани парас ĕç планне туса хатĕрлемелле, çамрăк кадрсене яланах куç умĕнче тытмалла. Çĕнĕ секретарьсем валли ятарласа семинарсем, инструктивлă канашлусем ирттермелле, вĕсенче партиллĕ ĕçе ертсе пымалли меслетсем çинчен тĕплĕ докладсем тумалла, пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштармалла.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене воспитани памалли чи лайăх меслет вăл—инструктаж пани. Секретарьсене коммунистсене партиллĕ ĕçе хутшăнтарма пулăшас пулать, парти порученийĕсем пама вĕрентес пулать.

Парти организацийĕн пур членĕсем те активлă ĕçе хутшăнаççĕ пулсан, кашни коммунист хăйне панă поручение кăмăлтан пурнăçлать, парторганизаци мĕнпур ĕçне лайăхлатма пулăшать пулсан, çав парторганизаци яланах кĕрешӳре пултарулă коллектив пулса тăрать.

Парти порученийĕсем пани коммунистсене задани тăрăх çеç ĕçлеме хăнăхтармалла мар. Кашни коммуниста кирек ăçта та хăйĕн пуçарулăхне палăртма, кирек ăçта та хăй *большевик пулнине туйма* воспитани памалла, вăл хăйĕн куç умне тĕл пулнă çитменлĕхе хăйĕн *пуçарăвĕпе цĕтерме тăрăштăр*.

Парти порученийĕ коммунистсен активлăхне ӳстермелли, парторганизацин пĕтĕм ĕçне, пултарулăхне вăйлатмалли шанчăклă меслет пулать. ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен, пуçламăш парторганизаци руководителĕсен, парти порученийĕсем парасси çине, вĕсене мĕнле пурнăçланипе тăтăшах тĕрĕслесси çине тимлĕ пăхмалла.

В. ИГНАТЬЕВ,
ВКП(б) обкомĕн инструкторĕ.

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Ял Совечĕпе унăн депутачĕсем

МУРКАШ. Хуçалăхпа культура строительствинчи задачăсене пурнăçлас ĕçре вырăнти Советсен ролĕ пысăк пулмалла.

Суйлавсем пулса иртнĕ хыççăн Муркаш ял Совечĕн ĕçĕ чылай лайăхланчĕ. Вăл организациллĕ-массăллă ĕçе тимлĕрех туса пыма пуçларĕ. Ял Совечĕ депутатсене кулленхи ĕçе анлă хутшăнтарать, яланхи комиссисен ĕçне йĕркелеме пулăшать, сессисемпе исполком ларăвĕсене тĕплĕ туса хатĕрленĕ план тăрăх ирттерет, вĕсенче тĕрлĕрен ыйтусене куллен сÿтсе явать. Çакă вăл ял Советне хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем туса пыма пулăшать.

Муркаш ял Совечĕ—районти чи пысăк ял Совечĕсенчен пĕри. Унăн территорине пилĕк ял кĕрет. Колхозлă ялсен ÿссе пыракан культури тата малашлăхĕ ял Совечĕ умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Вĕсене ăнăçлă пурнăçлас тесен, ял Совет исполкомĕн, депутатсен, яланхи комиссисен членĕсен тата ялти активăн хăйĕн ĕçĕсене тата та лайăхлатмалла, суйлавçăсен наказĕсемпе сĕнĕвĕсене тĕп вырăна хурса ĕçлемелле. Çакна ял Совечĕ тата унăн активĕ лайăх ăнланнă.

Ял Советне иртнĕ суйлавра 21 депутат суйланă. Вĕсем—колхоз производствин хастарлă организаторĕсем, вайлă тырпул мастерĕсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри стахановецсем, ялти учительсем, медицинăпа ветеринари тата культурăпа сутĕç работникĕсем. Ял Совечĕн яланхи комиссийĕсем хăйсем тавра ялти активистсене 43 çынна пĕрлештерсе тăраççĕ, вĕсемпе тачă çыхăну тытаççĕ. Ял Совет исполкомĕ хăйĕн депутачĕсене ял Совечĕн пурнăçĕпе ĕçĕсене тăтăшах хутшăнтарать, вĕсен ĕçĕпе куллен интересленет, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшать, государство заданийĕсене пурнăçлас ĕçри организаторла пултарулăхне ÿстерсе пырать.

Ял Советĕнчи колхозсем иртнĕ çулччен хуçалăхпа политикăллă кампанисенче юлса пынă, государство заданийĕсене çителĕклĕ тултарман. Иртнĕ çулта ял Советĕнчи 5 колхоз пĕр колхоза пĕрлешрĕç. Пĕрлешнĕ колхоз малтанхи кунсенчех хăвăрт аталанма тытăнчĕ. Хăватлă техникăпа анлă усă курса, ĕçе тĕрĕс организацилесе, колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк пахалăхпа ирттерчĕ. Вăл иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илчĕ, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçларĕ. Колхоз государствăна памалли выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене кăçалхи пĕрремĕш кварталшăн иртнĕ кĕркунирех парса татрĕ.

Колхоз производствинчи çитĕнÿсем ял Совечĕн яланхи ялхуçалăх комиссийĕ (председателĕ агроном П. Чугунов юлташ) массăсен творчествăллă пултарулăхĕ çине таянса, активпа тачă çыхăну тытса ĕçлениччен те килнĕ. Ялти актив комиссин шанчăклă тĕрекĕ пулса тăрать. Комисси членĕсем колхоз производствинче стахановецсем шутланса тăраççĕ. Сăмахран, депутат П. Оньков Сталин ячĕпе тăракан колхозра ĕне фермин заведующийĕ пулса ĕçлет. Иртнĕ çулта фермăри кашни ĕнерен 1.440-шер литр сĕт суса илнĕ. Е. Васильева депутат сысна фермине пиллĕкмĕш çул ĕçлет. Вăл иртнĕ çулта кашни сысна аминчен 14-шар çура илсе çитĕнтерчĕ. Васильева юлташ хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе лăпланса лармасть. Зоотехникăпа ветеринари наукин çитĕнĕвĕсемпе тата çĕршыври паллă свинаркăсен ĕç меслечĕсемпе хăйĕн ĕçĕнче анлă усă курса, кăçал кашни сысна аминчен 18-шар çуравран кая мар илме ĕмĕтленет. Васильева юлташ ытти работниксене те ĕçре тăтăшах пулăшать, юлса пыракансене малта пыракансен опычĕпе усă курма вĕрентет.

Ял Совет депутачĕсем культурăпа хуçалăх строительствине куллен хутшăнаççĕ. Сессисемпе ларусене ирттерес умĕн ял Совечĕ депутатсене пухса канашлусем ирттерет, вĕсене кун йĕркинче тăракан ыйтусене хатĕрлеме тĕрлĕ поручени́сем парать. Ку вăл депутатсен ĕçри пултарулăхне ÿстерме, вĕсене куллен вĕрентсе пыма, суйлавçăсемпе тачă çыхăнса ĕçлеме пулăшать.

Çак кунсенче ял Совет сессийĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине сÿтсе яврĕ. Сесси пухăнас умĕн эрне малтан Чугунов, Оньков, Васильева депутатсем ялсенчи активистсемпе пĕрле колхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслерĕç. Вĕсем кашни уй-хир бригадин ĕçне тĕплĕ пăхса тухрĕç, бригадăри колхозниксемпе канашлусем ирттерчĕç. Канашлусенче колхозниксем çуракине хатĕрленес ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртрĕç. Çак канашлусем сессин кун йĕркинче тăракан ыйтăва тĕплĕнрех сÿтсе явма пулăшрĕç, палăрнă çитменлĕхсем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăнма май пачĕç.

Депутатсем ял Совет умне çĕнĕрен те çĕнĕ ыйтусем кăларса тăратаççĕ. Иртнĕ çулта çавăн пек ыйтусем сессисемпе исполком ларăвĕсенче 14 ыйту пулнă. Акă, гигиенăпа санитари тата благоустройство комиссийĕн председателĕ Д. Ефремова депутат тата Р. Толстов депутат сĕннипе ялсен сăн-сăпатне лайăхлатас ыйтăва ял Совечĕн сессийĕнче сÿтсе явнă. Çакăн хыççăн ялсенче 2 пуне ялăн йывăç лартнă, 4 çăл, 1 кĕпер çĕнĕрен тунă, çурхи шывсем çĕмĕрнĕ çулсене 8 километр тăршшĕ юсаса тухнă. Ялсене таса та тирпейлĕ тăвассишĕн ял çыннисен виçĕ воскресникне ирттернĕ.

Ял Советĕнче культурăллă-массăллă ĕç чылай лайăхланчĕ. П. Сергеев, Ф. Артемьева, П. Чугунов депутатсем колхозниксем хушшинче наукăллă тата политикăллă пĕлÿсем сарас, ялхуçалăх, çутçанталăк ыйтăвĕсемпе лекцисемпе докладсем ирттерес тĕлĕшпе пуçарулла ĕçлеççĕ. Вĕсем пуçарнипе вулав çурчĕн библиотекинчи кĕнекесен фончĕ ÿссе пырать. Иртнĕ çулта кăна вулав çурчĕ валли 1.500 тенкĕлĕх кĕнеке туяннă.

Д. Федоров депутат бюджетпа финанс комиссийĕн председателĕ пулса ĕçлет. Комисси укçа-тенкĕ пухмалли плана куллен ирттерсе тултарассишĕн тăрăшать. Ял Совечĕ тăваттăмĕш кварталти финанс планне ăнăçлă тултарчĕ.

Ял Совет исполкомĕ депутатсене пухса час-часах совет строительствин ыйтăвĕсемпе канашлусем ирттерет. Çак канашлусенче пурĕ 16 ыйту сÿтсе явнă. Сăмахран, «Депутат — халăх тарçи» «Ленинпа Сталин Советсен ролĕ çинчен», «Суйлавçăсемпе депутатсем хушшинчи туслăх» тата ытти ыйтусемпе те докладсем ирттернĕ.

Иртнĕ çулта Муркаш ял Совечĕ Чуманкасси ял Совечĕпе ăмăртса ĕçлесе, социализмлă ăмăртура мала тухрĕ. 1952 çулта депутатсемпе, активпа тачă çыхăнса ĕçлесе ял Совечĕ хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешет.

П. СЕМЕНОВ,
И. КОСТИН.

Совхозсем квартал планне тултарнă

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана ăнăçлă тултарассишĕн кĕрешсе, республикăри совхозсем пĕрремĕш кварталта государствăна ашкакай памалли плана 148,3% тултарнă.

Çĕрпÿри государство селекци станцийĕ пĕрремĕш кварталта государствăна сĕт памалли плана та срокчен тултарнă, иккĕмĕш кварталшăн икĕ пин литра яхăн сĕт панă.

Квартал планне срокчен тултарассишĕн

ШУПАШКАР... ШĂХАСАН. Районти апат-çимĕç комбиначĕ иртнĕ çулталăк планне 168 процент тултарнă. Комбинат коллективĕ кăçал çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн социализмлă ăмăртăва вăйлатса пырать. Пĕрремĕш квартал планне Совет Çарĕ кунĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ. Январь уйăхĕнчи плана 110 процент тултарнă пулсан, февраль уйăхĕнчи плана 12 кун хушшинче тултарнă.

* * *

КОМСОМОЛЬСКИ. Вăрманхĕрри Чурачăк ял Совечĕ 1951 çулхи тăваттăмĕш кварталти финанс планне 112,4 процент тултарнă. Халăх хуçалăхне малалла аталантармалли 1951 çулта кăларнă заем укçине те пухса çитернĕ. Финанс планне ăнăçлă тултарнăшăн ял Советне район Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă.

Укçа-тенкĕ пухас ĕç кăçалхи çул та ăнăçлă пулса пырать. Пĕрремĕш кварталти финанс планне ирттерсе тултарассишĕн ял Совечĕ социализмлă обязательствăсем илчĕ, плана мартăн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕ.

А. ЕРЕМЕЕВ.

Колхозлă ял çĕнелет

ЭЛĔК. Пĕрлешсе пысăкланнă колхоз хăвăртрах аталанма пултарнине халĕ пурте лайăх ăнланаççĕ. «Красная заря» колхозра, вăл пĕрлешсе пысăкланнă хыççăн, тырпула тухăçлăхĕ ÿсни тата колхоз хуçалăхĕ тĕреклене пыни уççăнах палăрчĕ. Иртнĕ çулхипе колхоз общественăллă çĕнĕ çуртсем чылай туса лартрĕ.

Колхозниксен тупăшĕ икĕ хут ÿсрĕ.

Колхозра клуб пур. Кунта колхозниксем пушă вăхăта культурăллă ирттереççĕ. Клубра час-часах спектакльсем, лекцисемпе докладсем пулаççĕ. Кашни эрнере пĕр хут кинокартина кăтартаççĕ. Клуб çумĕнче библиотека ĕçлет, унта 4.500 кĕнеке. Пĕлтĕр библиотекăран кĕнекесем илсе вулакансен хисепĕ 490 çынна çитрĕ. Нумай колхозниксем хаçат-журналсем çырăнса илеççĕ. Фельдшер пунктĕ колхозниксене медицина енĕпе пулăшу парса тăрать. Кăçал ветеринари пункчĕ уçăлчĕ.

А. ЕФИМОВ.

Кĕнеке магазинĕнче

ÇĔРПУ. Район центрĕнчи кĕнеке магазинĕнче иртен пуçласа каçчен çынсем нумай пулаççĕ. Кунта продавец пулса ĕçлекен А. Митрофанова юлташ ĕçрынниксене илмалах ăша кăмăлпа кĕтсе илет. Вăл хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пырать.

Çĕнĕрен килнĕ кĕнекесене курăнмалла вырăна, витрина çине курăççĕ. Юлашки вăхăтра кĕнеке магазинне Максим Горькин «Çынсем патĕнче», Чăваш халăх поэчĕ И. Хусанкай çырнă «Вăрман юрлать», Василий Давыдовăн «Çамрăк ăру», Джек Лондонăн «Пуринĕçа юратни» тата ытти чăвашла кĕнекесем, агрозоотехника курсĕнче вĕренекенсем валли вырăсларан чăвашла куçарса кăларнă учебниксемпе, брошюрăсем нумай илсе килнĕ. Çак кунсенче Н. В. Гоголăн чăвашла куçарнă кĕнекисене сутма пуçларĕç. Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнă май, районти ĕçрыннисем унăн произведенийĕсене нумай илеççĕ.

Г. ПАВЛОВ.

Тракторсем кÿрсе килнĕ

ВĔПРЕÇ. Вăрмансем çĕнĕ техникăпа пуянланса пырать. Нумай пулмасть кунта йывăçа çул хĕррине турттарса кăлармалли тракторсем кÿрсе килнĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ ĕçлеме пуçларĕç. Л. Пестова В. Фролов юлташсем кун пек трактора пуçласа ĕçлеççĕ. Апла пулсан та вĕсем малтанхи кунах çул хĕррине 27 кубометр вырăнне 30—32 кубометр турттарса, кăларса нормăна ирттерсе тултарчĕç.

(Хамăр инф.).

Çĕнĕ меслетсемпе усă курса

Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи стахановецсем çĕршывра чапа тухнă çынсен ĕç меслечĕсемпе туллин усă кураççĕ. Акă, сăмахран, 5-мĕш цехри фрезеровщик В. Спирин юлташ, Камскри хутпа целлюлоза фабрикинчи Мазунин машинист ĕç меслечĕсене вĕренсе, çĕнĕ çитĕнÿсем турĕ. В. Спирин юлташ ĕçе яланах смена пуçланиччен çур сехет малтан тухать. Ĕçре кирлĕ пулакан инструментсемпе детальсене пĕлсе, кашни япала вырăнне шута илсе вырнаçтарса хурать. Çапла майпа ĕç вăхăтĕнче унăн пĕр ытлашши хускану та пулмасть.

Вăл станоксене 3—4 минутра хута ярса, татти-сыпписĕр йĕркеллĕ ĕçлеттерет.

В. Спирин юлташ—комбинатра чи лайăх стахановецсенчен пĕри. Ăна пĕрре кăна мар министр приказĕсенче паллă тунă, «Социализмлă ăмăрту отличникĕ» значок парса наградăланă, тухăçлă ĕçленĕшĕн дирекци укçа парса премиленĕ.

Г. Генеральшин юлташ, В. Спирин меслечĕсемпе ĕçлесе, кулленхи ĕç нормине 400 процент таран тултарать. Нумай рабочисем В. Спиринпа Г. Генеральшин стахановецсем пек ĕçлеме тăрăшаççĕ. 3-мĕш цехри В. Мытиков столяр пĕр вăхăтрах темиçе деталь тăвассипе анлăн усă курать. Çĕнĕлле ĕçлесе вăл ĕç нормине 384 процент таран тултарать.

6-мĕш цехри столяр Н. Манешин «Москвич» автомобиль кузовĕн пайне тумалли ĕç процесĕсене тĕпренех çĕнетсе урăхлатрĕ, ĕç тухăçлăхне нумай ÿстерчĕ.

Автомобиль кузовĕн пайĕсене тăвасси çăмăл ĕç мар. Ăна тунă чухне пилĕк-ултă хут верстак çине лартса савалламалла. Савалама çын вăйĕ нумай кирлĕ, çавна пула сахал мар ĕç вăйĕ усăсăр сая каять.

Н. Манешин юлташ ĕç меслетне тĕпренех улăштарчĕ. Вăл хăйне пулăшма виçĕмĕш разрядпа ĕçлекен рабочие илчĕ. Пысăк квалификациллĕ ĕçсене тунă вăхăтра унăн помощникĕ пĕчĕкрех ĕçсем тунă. Çапла вара, пĕр вăхăтрах икĕ операци туса, ĕç тухăçлăхне ÿстернĕ. Кунсăр пуçне алă савăпне улăштарса, электричествăпа ĕçлекен савапа усă курма тытăнни те ĕçе чылай çăмăллатнă.

5-мĕш цехра М. Атрохов фрезеровщик шкафсем тунă çĕрте çĕнĕ меслетсемпе усă курать.

Çакăн пек тĕслĕхсем пирĕн комбинатра çĕршерĕн шутланаççĕ. 1950 çулта 751 стахановец пулнă пулсан, иртнĕ çулта вĕсен йышĕ 899 çынна çитрĕ.

Пирĕн комбинатра стахановец-новаторсен ĕç меслечĕсене тĕтăмах вĕренсе, ĕçре анлăн усă кураççĕ. Малта пыракан рабочисем хăйсен ĕç опычĕсене станоксем умĕнче кăтартаççĕ. Стахановла шкулсем организацисленĕ. Çак шкултан вуншар рабочисем вĕренсе тухнă. Стахановла тикунсенче малта пыракан рабочисен ĕç опычĕсемпе тĕплĕн паллаштараççĕ. Нумай тиражпа тухакан хаçатпа цехсенчи стена хаçачĕсем стахановецсен ĕç опытне анлăн сутатса пыраççĕ.

Новатор-рабочисемпе рационализаторсене пирĕн комбинатри инженерсемпе техниксем яланах пулăшса пыраççĕ. Сталин премийĕ лауреачĕ Ковалев инженер ĕç меслечĕпе 178 çын вĕрентсе кăларнă.

Тумтир çакмалли шкафа тунă çĕрте, ĕçри лайăх меслетсене йышăннипе тата ĕç вырăнне тĕрĕс йĕркеленипе, ĕç тухăçлăхĕ 65 процент, «Москвич» автомобиль кузовĕн пайĕсене тунă çĕрте 25 процент, пружинăллă матрац тунă çĕрте 15 процент ÿсрĕ.

Халĕ комбината сывлăшпа ĕçлекен тата электричество приборĕсем нумай кÿрсе килнĕ. Халиччен алăпа тунă ĕç процесĕсене пĕтĕмпех механизацилеççĕ. Иртнĕ çулта пĕрене йăтмалли иккĕмĕш секци тунă тата пĕрене туртмалли лебедка лартни рабочисен ĕçне чылай çăмăллатрĕ.

Алăпа деталь лартмалли станоксене те автоматпа ĕçлемелле тăваççĕ. 4-мĕш цехра карусельно-фрезернăй станок лартнă, 5-мĕш цехра алăпа якатмалли станоксене валикпа якатмалли станоксемпе улăштарнă. Тумтир çакмалли шкафсем тунă çĕрте конвейер системипе усă кураççĕ. Çавна пула ĕç тухăçлăхĕ 2,5 хут ытла ÿсрĕ.

Конвейер ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерме май панине шута илсе, 102 метр тăршшĕ çĕнĕ конвейер ĕçе янă.

1951 çулта 151 рационализаторла сĕнÿ панă. Çак сĕнÿсене пурнăçласа çулталăк хушшинче 822 пин тенкĕ перекетленĕ.

Пахаа продукци туса кăларассишĕн социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă. 44 бригада пысăк пахалăхлă продукци çеç туса кăларассишĕн ăмăртать.

«Буревестник» фабрикинчи Муханова Левченко стахановецсен пуçарăвĕпе комбинатра продукцин хăйне ларакан хакне кашни операци тăрăх чакарассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Пружинăллă матрацсем тунă чухне пружина çыхакан шпагат нумай сая кайнă, унăн вĕçĕсене тата-тата пăрахнă. В. Еремеева, А. Аладина, Н. Балагаева, Е. Галанина, Т. Балашова тата В. Левина обойщицăсем кашни уйăхра 15 килограмм шпагат перекетлене çăмах панине чыслăн пурнăçларĕç. 5-мĕш цехра 1951 çулта çĕршер пин тенкĕлĕх материал перекетленĕ.

1951 çулта ирттернĕ пур мероприятисем ĕç тухăçлăхне плана пăхниччен 21 процент ытларах ÿстерме май пачĕç.

В. КУЛЕНКО,
инженер.

Тăван республика столици—Шупашкар хули ÿссе пырать. Унта çулсерен-çул нумай хутлă çĕнĕ чул çуртсем тăваççĕ. Хула урамĕсенче илемлĕ автобуссем çÿреççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 1951 çул вĕçĕнче Карл Маркс урамĕнче туса лартнă çĕнĕ çурт (сулахайра).

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Фельетон

Алă пуснă та— ĕçĕ пĕтнĕ

Çĕмĕрле районĕнчи Мисчĕри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе Н. Ф. Ермишин юлташа 1951—1952-мĕш вĕренÿ çулĕ пуçланас умĕн тĕлĕнмелле приказ вулаттарчĕç. Унта ăна, шкулта классен хисепĕ чакнă пирки, ĕçрен кăларни çинчен каланă. Приказа ăнлантарса панинче: райçутĕç пайĕн заведующийĕ Яробейкин юлташ ыйтнă тăрăх çырнă, тенĕ.

Николай Федорович ку приказа ĕненмен. Ăна ĕненме те май çук. Шкулта тăватă кĕçĕн класс, кашни учителĕн иккĕр класпа ĕçлемелле пулать. Николай Федоровича ĕçрен кăларсассăн, пурпĕрех тепĕр учитель кирлĕ. Ермишин юлташ çакăн çинчен Чăваш АССР Çутĕç министерствине çырать, хăйĕн ĕçлес килни çинчен пĕлтерет. Виçĕ уйăхран министерствăран çакăн пек ответ килет:

«Учитель пулнă Ермишин юлташа.

...Сире ĕçрен кăларни çинчен çырнă приказа улăштарма пултараймастпăр. Мĕншĕн тесен, Эсир ку таранччен пĕр класпа кăна ĕçленĕ, халĕ вара икĕ класпа ĕçлемелле пулать. Вăтă пирки тата сывлăхăр начар пирки, Сире ĕçлеме йывăртарах пулать. Министерствăн кадрсен управленийĕ нумай çул ĕçленĕшĕн Сире тав тăвать, канура ÿсĕмсем (çаплах çырнă—Е. А.) сĕнет.

Чăваш АССР Çутĕç министерствин кадрсен управлени начальникĕ Е. Филиппова».

54 çул хушши ĕçленĕ учителе Министерство çакăн пек тăрăхласа «тав тăвасси» çинчен Ермишин юлташ шухăшлама та пултарайман. Кам калать Николай Федорович сывлăхсăр тесе? 68 çула çитсе те вăл пĕр урок та сиктермен. Икĕ класпа ĕçлемен-и вăл? 21 çул хушши икĕ класпа ĕçленĕ! 54 çултан вăл 38 çулне пĕр шкулта—Мисчĕри çичĕ çул вĕренмелли шкулта ĕçленĕ. 30 çул хушши вăл çутĕç пайĕн штатра тăман инспекторĕ пулнă, 12 çул хушши учительсен методикăллă пĕрлешĕвне ертсе пынă, 20 çула яхăн профсоюзăн вырăнти комитечĕн председателĕ пулса ĕçленĕ. 1944 çулта ăна Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ ятне панă, «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе наградăланă.

Вăй-халлă чухне ĕçленĕ те, халĕ начар вĕрентет пулĕ, тейĕç. Ку ыйту пирки шкул директорĕ пурийчен лайăхрах ответлет:

«Ермишин юлташ хăйĕн ĕçне чунтан парăнса туса пырать. Уроксене яланах календарнăй плана çирĕп пăхăнса, хăйĕн педагогика мастерлăхĕпе туллин усă курса ирттерет. Уроксенче яланах хăй туса хатĕрленĕ лайăх наглядная пособисемпе усă курать. Вăл туса хатĕрленĕ наглядная пособисенчен чылайăшне районти педагогика кабинетĕнчи выставкăна тăратнă. Унăн нумай çул хушши пухнă опычĕпе шкулти учительсем кăна мар, таврари шкулсенче ĕçлекен учительсем те усă кураççĕ. Учительсем хушшинче унăн чысĕ пысăк. Общественăллă ĕçе активлă хутшăнать.

Вăл вĕрентнĕ иккĕмĕш класри ачасем, пĕр ачасăр пуçне, пурте виççĕмĕш класа куçнă».

Ермишин юлташ çинчен вĕренÿ пайĕн заведующийĕ те çавăн пекех калать.

Ватă учителĕн ĕçлес кăмăлĕ пысăк. Вăхăт çитсен, вăл хăех çутĕç пайне пырса: «Çитĕ, чылай ĕçлерĕм, канма та вăхăт ĕнтĕ», тейĕ. Анчах çутĕç пайĕн заведующийĕ Н. А. Яробейкин юлташ ку ыйтăва чунсăрла татса пама шутланă.

Вăл министерствăна янă хут çине мĕн çырни пире паллă мар. Кирек мĕнле пулсассăн та, мухтаса çырман ĕнтĕ. Ун хучĕ тăрăх министр заместителĕ ыйтăва кирлĕ пек тĕпчесе пĕлмесĕрех приказ панă. Приказ çырма йывăр мар, анчах ăна пула ватă учитель август уйăхĕнчене ĕçсĕр çÿрет. Çав вăхăтрах ун вырăнне райçутĕç пайĕ тепĕр учитель ярса панă. Апла пулсан, ĕç кунта пачах «класс комплекчĕ чакнинче» мар, урăххинче...

Çак тимсĕрлĕ ĕç çамрăк ăрăва вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе нумай çул хушши чунпа парса ĕçленĕ Н. Ф. Ермишина хытă пăшăрхантарать. Анчах унăн ыйтăвне тивĕçлипе татса парасси çинчен Чăваш АССР Çутĕç министерствинче шутламаççĕ. Приказ çине алă пуснă, çырăвĕ çине ответ панă—ĕçĕ те пĕтнĕ, теççĕ пулас.

Е. АФАНАСЬЕВ.

„Чăваш Коммуни“ хаçатри çырнă хыççăн

„Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли резервсем пирки“

1951 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра «Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли резервсем пирки» ятлă статья пичетленсе тухрĕ. Статьяра Канашри вагонсем юсакан заводра ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана тултарса пыманни, цехсем кал-кал ĕçлеменни тата ĕç тухăçлăхне ÿстермелли резервсемпе кирлĕ пек усă курманни çинчен çырнăччĕ.

ВКП(б) Канаш хула комитечĕ статьяри фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Вагонсем юсакан заводри партбюро, статьяна ларура сÿтсе явса, цехсенчи пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене тата заводăн главнăй инженерне ысăннă çитменлĕхсене пĕтерес, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана тултарса пымалла тăвас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушнă.

Колхоз пурнăçĕн ыйтăвĕсем

Производство планĕсене тĕплĕ тумалла

Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă йĕркелес тĕлĕшпе производство планĕсене тата тупăшпа расход сметисене вăхăтра, тĕрĕс туни пысăк вырăн йышăнать. Производство планĕ колхозсене ялхуçалăх умĕнчи тĕп задачăна—тырпул тухăçлăхне чылай ÿстерес, общественăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерес задачăна пурнăçа кĕртме пулăшать.

Республикăра малта пыракан колхозсем çакна лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем производствăна план тăрăх ертсе пырас ĕçе çулсерен лайăх йĕркелеççĕ. Ку вăл мĕн пур ресурссене общественăллă хуçалăха вăйлатма мобилизацилеме май парать.

Анчах та хăшпĕр колхоз руководителĕсем производство планĕсене вăхăтра тата пĕлсе тума тăрăшмаççĕ. Пĕлтĕр республикăри колхозсенчен 10 процентĕ çуракине тухнă тĕле те производство планĕсене туса пĕтермен пулнă. Уйрăмах Октябрьски, Шăмăршă тата Первомайски районĕсенчи колхозсем кая юлнă. Чылай колхозсенче производство планне ялхуçалăх ĕçĕсене йĕркелесе пыма мар, ячĕшĕн кăна тунă. Уй-хир бригадисене производство заданийĕсене час-часах трактор бригадисен заданийĕсемпе çыхăнтарса паман. Çавăн пирки уй-хир бригадисенче тракторсемпе тумалли ĕçсен калăпăшне кирлĕ пек валеçмен, бригадăри ĕç вăйĕпе тата туртăм вăйĕпе туллин усă курман.

Чылай районсенчи ялхуçалăх пайĕсем колхозсенче производство планĕсем тăвас ĕç çине тимлĕ пăхман, ялхуçалăх специалисчĕсем колхоз производствине планлас ĕçе çителĕксĕр хутшăннă. Çавна пула нумай колхозсенче производство планне тунă чухне счетоводсемпе бухгалтерсем кăна таблицăсенче цифрăсем лартса тухнă, колхозри актива çак ĕçе хутшăнтарман. Планланă чухне артелĕн общественăллă хуçалăхне вăйлатмалли майсене тĕплĕ шухăшласа палăртман. Хăшпĕр колхозсенче производство планне колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче те пăхса тухман, тупăшпа расход сметисене райсовет исполкомĕсем çирĕплетмен.

Çавăн пек çитменлĕхсем малашне пулмалла мар. Халĕ ялхуçалăх ĕçĕсен 1952 çулхи планне кашни колхоза çитерне, производство планне тăвас ĕçе вăраха яма нимĕнле сăлтав та çук.

Производство планĕ тăвас ĕçĕн пĕрремĕш тапхăрĕ вăл—ĕç нормисене пăхса тухасси пулать. СССР Министрĕсен Совечĕн 1948 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнчи постановленийĕ тăрăх, колхозсенче кашни çулах ĕç нормисене тата ĕçшĕн ĕçкунĕсем тÿлемелли хаксене çĕнĕрен пăхса тухмалла, малта пыракансем тунă çитĕнÿсене шута илсе, нормăсене çĕнĕрен тумалла, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче çирĕплетмелле.

Производство планĕнче тырпул туса илес ĕçе планласси пысăк вырăн йышăнать. Тырпул акмалли лаптăк пысăкăшне тата тырпул тухăçлăхне палăртнă чухне çакна шута илмелле: пуçса кĕртнĕ тырпул государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлама, колхоз нушисене тивĕçтерме, ĕçкунĕсем тăрăх валеçме çителĕклĕ пултăр. Çак плана общественăллă выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ чухлĕ апат хатĕрлессине те палăртмалла.

Акмалли лаптăксене палăртнă чухне тĕрĕс пусă çаврăнăшне йĕркелессине асра тытмалла. Вăйлă тырпул туса илес тĕллевпе агротехника ĕçĕсене тĕплĕ планламалла. Акма çителĕклĕ чухлĕ сортлă вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене шута илмелле. Мĕн чухлĕ удобренисем кирлĕ пулассине палăртса, кашни колхозрах удобрени ытларах хатĕрлеме пулăшакан пур майсене те кăтартмалла. Çавăн пекех тĕп ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерме срокĕсене тĕрĕс палăртни кирлĕ.

Уй-хир бригадисене тырпул тухăçлăхĕ тĕлĕшпе заданисем парас ĕç çине питех те тимлĕн пăхас пулать. Пур бригадăсене те вĕсен условийĕсене шута илмесĕр, тырпул тухăçлăхĕ енĕпе пĕр пек задани пани сиен çеç кÿрет. Çавăнпа та кашни бригадăн ĕç условийĕсене шута илмелле, малта пыракан бригадăсемпе танлашас задача лартмалла. 1952 çулта тырпул тухăçлăхне нумай ÿстерес шутпа пур майсемпе те усă курассишĕн кĕрешмелле.

Тракторсемпе тумалли ĕçсен калăпăшне производство планĕнче колхоз МТС-па тунă договор тăрăх кăтартаççĕ. Договорпа килĕштерсе, трактор бригадин ĕçсен çулталăкри планĕпе çыхăнтарса, уй-хир бригадисем ĕç планне тумалла. Çакă вăл производствăна тĕрĕс организацилес ĕçре пысăк вырăн йышăнать, ĕç вăйĕпе тĕрĕсрех усă курма май парать.

Колхозсем умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри вăл укçа-тенкĕ тупăшне ÿстересси пулать. Çак задачăна татса пама таварлăх ялхуçалăх продукчĕсем нумайрах туса илни (тырпул тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерни), кашни колхозăн условийĕсене кура, пысăк тупăшлă отраслĕсене аталантарни (сад, хурт-хăмăр, пулă ĕрчетесси, пахча çимĕçсемпе нумай çул ÿсекен курăк вăррисем туса илесси, техникăллă культурăсем акасси) пулăшать. Колхозри пулăшуллă предприятисем те чылай тупăш параççĕ. Çавăнпа та производство планĕсем тунă чухне пысăк тупăшлă отраслĕсене аталантарасси тата пулăшуллă предприятисем тăвасси çинчен тĕплĕ шухăшламалла.

Общественăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе планласси тата мĕнпур выльăхсен тухăçлăхне ÿстересси çине питех те тимлĕ пăхмалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма кирлĕ тĕп услови вăл—выльăх апачĕн çирĕп никĕсне тăвасси, выльăх-чĕрлĕх валли çулла та, хĕлле те тулăх апат хатĕрлесси пулать. Çак ыйтăва татса пама курăк акмалли уйлă пусă çаврăнăшне йĕркелемелле, улăх-çарансене лайăхлатмалла, выльăх апачĕпе тĕрĕс усă курмалла. Выльăх апачĕпе тĕрĕс усă курассине йĕркелес тĕлĕшпе хĕл вăхăтĕнче мĕн чухлĕ выльăх апачĕ кирлĕ пулнине плана тумалла. Мĕнпур утă-улăма, сĕтеклĕ тата концентратлă апатсене шута илмелле, утă-улăма 10—20 процент чухлĕ страховой фонд валли хăвармалла. Выльăх апачĕ çителĕксĕр пулас пек курăнсан, ăна тупмалли майсене çийĕнчех палăртас пулать.

Производство планне тунă вăхăтрах колхоз правленийĕсен çулталăкри тупăшсемпе расходĕн сметине тумалла. Унта производство планĕпе килĕштерсе, ăçтан укçа-тенкĕ тупăшĕ илессине, ăна мĕн тума расходласине тĕплĕ кăтартмалла. Çак ĕçе колхозниксен анлă массисене хутшăнтармалла.

Колхозсенче производство планĕсем тата тупăшсемпе расходсен сметисене тăвас ĕçе ялхуçалăх органĕсемпе МТС-сем ертсе пымалла. Çак ĕçшĕн районсенчи ялхуçалăх пайĕсемпе МТС директорĕсем тÿреммĕнех ответлă пулса тăраççĕ.

Производство планĕсем тăвассине вăраха хăварма юрамасть. Çак ыйтупа çыхăнса тăракан ĕçсене колхозсенче, бригадăсенче, фермăсенче мартăн 1-мĕшĕччен тумалла. Унччен производство заданийĕсене бригадăсемпе фермăсенче ĕçлекенсен канашлăвĕсенче пăхса тухмалла, колхоз производство планне колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче çирĕплетмелле.

Вăхăтра тата тĕрĕс туса хатĕрленĕ производство планĕ партипе правительство тырпул тухăçлăхне, общественăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе лартнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама пулăшĕ.

И. КОСМИНСКИЙ.

Совет Союзĕпе Китай пĕр-пĕрин хушшинче договор тунăранпа икĕ çул тултарнă ятпа Пекинра пулнă савăнăçлă лару

ПЕКИН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Китайпа Совет Союзĕн туслăх обществи ыхçаринипе паян Пекинра савăнăçлă лару пулнă. Хна Совет Союзĕпе Китай пĕр-пĕрипе туслă пурăнасси, союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор туса алă пуснăранпа икĕ çул тултарнă ятпа иртгернĕ.

Ларура Китай Халăх Республикин центральнăй халăх правительстви членĕсем, Китайри коммунистсен партийĕн центральнăй комитечĕн членĕсем, ытти демократиллĕ партисен, обществăллă тата культурăллă организацисен, çамрăксен организацийĕсен руководителĕсем, промышленноçпа транспортри ĕç геройĕсем, ялхуçалăхĕнче малта пыракансем, Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çар боецĕсемпе командирĕсем, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин делегацийĕ, Китай халăх добровольцĕсен Корейăри фронтран Пекина пынă делегацийĕ, Китайри паллă писательсемпе артистсем, СССР Посольствин представителĕсем тата халăх демократи çĕршывĕсен дипломати представителĕсем пулнă.

Савăнăçлă ларăва Китайпа Совет Союзĕн туслăх обществин председателĕ Лю Шао-ци кĕске сăмах каласа уçнă.

Унтан Государство администраци совечĕн премьерĕ Чжоу Энь-лай пысăк сăмах тухса каланă. Ларăва пухăннисем Чжоу Энь-лай каланине ырласа темиçе хутчен те тăвăллăн алă çупнă.

Ларура тата Совет Союзĕн Китай Халăх Республикинчи Посолĕ Н. В. Рощин, Корея делегацийĕн представителĕ, Китай халăхĕн Корейăри фронтра çапăçакан добровольцĕсен представителĕ сăмах тухса каланă.

Тĕнчери мире сыхламалли тата пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлемелли союз

ПЕКИН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Китай халăхĕ ССР Союзĕпе Китай Халăх Республики пĕр-пĕрипе туслă пурăнасси, союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор туса алă пуснăранпа икĕ çул тултарнине савăнăçлă уявлать.

Паян тухнă пур хаçатсенче те çак чаплă уяв çинчен умстатьясем пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çинче паллă обществăллă деятельсем, демократиллĕ партисен лидерĕсем, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче малта пыракансем, Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çарпа Китай добровольцĕсен представителĕсем çырнă статьясем пичетленсе тухнă.

«Женьминьжибао» хаçат хăйĕн умстатьинче марксизм-ленинизмăн аслă вĕрентĕвĕ Китай халăхĕ çĕнĕ пурнăç çулĕ çине куçас ĕçре уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртать. «Вырăссем урлă Китай халăхĕ революциллĕ хĕçпăшала—марксизм-ленинизма вĕренчĕ, Китай халăхĕн аслă çулпуçĕ Мао Цзе-дун ертсе пынипе марксистла-ленинла революциллĕ теорие Китайри революцире пурнăçа кĕртрĕ», тесе çырать хаçат.

Китайри демократиллĕ лига хаçачĕ «Гуанминжибао» умстатьяра: «договор Китайпа ССР Союзĕнчи халăхсен, пĕтĕмпе 700 миллион çынлă халăхсен, аслă туслăхне ĕмĕрлĕхех çирĕплетрĕ», тесе çырать.

«Женьминьжибао» хаçатра Китай халăхĕн мире сыхлас тата Америка агрессине хирĕç кĕрешес тĕллĕшпе йĕркелен комитечĕн председателĕ, «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» паракан тĕнчери Сталинла преми лауреачĕ Го Мо-жо çырнă статья пичетленсе тухнă. Вăл хăйĕн статьинче договор пĕтĕм тĕнчери мире хўтĕлессишĕн кĕрешекенсен вăйне тĕреклетес ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртать.

«Совет Союзĕ—пĕтĕм тĕнчери мир тĕрекĕ. Совет Союзĕ хăйĕн ĕçĕсене мĕнле туса пырать, пирĕн те хамăр çĕршыври ĕçсене çавăн пек туса пырас пулать,—тесе çырать юлашкинчен Го Мо-жо.— Китайăн экономика строительствине аялă сарма пирĕн пĕрмаях укçана пурлăх пухса пырас пулать.

Икĕ аслă халăх—ССР Союзĕпе Китай халăхĕсем хушшинче союз туни Инçет Хĕвелтухăçĕнче тата пĕтĕм тĕнчере мирлĕ пурнăç тăвас ĕçри çирĕп шанчăк пулса тăрать».

Китай Халăх Республикине малалла аталантарас, çĕнĕ Китай тăвас ĕçре, пĕтĕм тĕнчери мире тĕреклетес ĕçре договор питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен, ССР Союзĕпе Китай Халăх Республики халăхĕсен тăванла çирĕп туслăхĕ çинчен, Китай халăхĕ совет халăхне тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен учительне, мир ялавне çўлте тытса пыракан И. В. Сталина тав туни çинчен Китайри рабочипе хресченсен демократиллĕ партийĕн центральнăй исполнительнăй комитечĕн председателĕ Чжан Бо-цзюнь, Пĕтĕм Китайри демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕн председателĕ Цай Чан, Чжигун партийĕн председателĕ Чэн Ци-ю тата ыттисем те çырасçĕ.

Центрти тата провинцисенчи хаçатсем договор тунăранпа икĕ çул тултарнă май массăсем хушшинче ĕçлессипе пĕтĕм çĕршывĕпех анлă сарни çинчен пĕлтересçĕ.

Совет Союзĕпе Китай Халăх республики хушшинче культурăллă çыхăну вăйланать

ПЕКИН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Юлашки икĕ çул хушшинче Китайпа Совет Союзĕ халăхĕсем хушшинче культурăллă çыхăнусем вăйланнă. Çакă вăл икĕ çĕршыв хушшинчи туслăха çирĕплетме пулăшнă.

Икĕ çул хушшинче Китайра Совет Союзĕн чылай делегацийĕсемпе уйрăм представителĕсем — писательсем, художниксем, ученăйсем, профсоюз руководителĕсем пулнă. Китайра пулнисем хушшинче—Илья Эренбург, Александр Фадеев, Л. Н. Соловьев тата Константин Симонов. Иртнĕ икĕ çул хушшинче Китайăн 14 делегацийĕ Совет Союзне кайса килнĕ. Китайпа Совет Союзĕн туслăх обществин делегацийĕн членĕсем Китая таврăннă хыççăн ССР Союзĕ строительствине енĕпе тунă çитĕнўсем çинчен, совет халăхĕн ырă шухăш-кăмăлĕ çинчен докладсем туса панă. Çав докладсене пĕтĕмпе 4 миллион çын итленĕ.

Китай халăхĕ совет литературине уйрăмах юратса вулать. Теорие вĕрентекен нумай кĕнекесене китайла куçарса кăларнă. Кунсăр пуçне, совет писателĕсем çырнă илемлĕ литература кĕнекисем 700 ытла китайла пичетлесе кăларнă. Н. Островскин «Хурçă епле хĕрнĕ», К. Симоновăн «Кунсемпе çĕрсем», Ванда Василевскин «Асамат кĕперĕ» кĕнекисене тата ыттисене те китайла куçарнă.

Совет Союзĕнче Мао Цзе-дун çырнă «Практика пирки» тата Лю Шао-ции çырнă «Интернационализмпа национализм» ятлă произведенисене вырăсла куçарса пичетленĕ. Илемлĕ литературăран «Сангань юханшывĕ çинчи хĕвел» ятлă произведение тата ыттисене те вырăсла куçарнă.

Икĕ çул хушшинче Китайра совет кинофильмĕсене 17 миллион çын ытла курнă. Çав фильмсене кăтартас ĕçе Китайпа Совет Союзĕн туслăх обществи тата унăн уйрăмĕсем пĕтĕм çĕршывĕпех организацилленĕ. Фабрикăсенче, шахтăсенче тата аслă шкулсенче Совет Союзĕнчи пурнăçпа паллаштаракан фотоўкерчĕксен выставкисене уçнă. Ку выставкăсене миллионшар çынсем пырса курнă. Совет Союзĕнчи халăх Китай кинофильмĕсене, çав шутра «Китай хĕрĕсем» тата «Хурçă салтак» фильмсене, юратса пăхасçĕ.

Китайпа Совет Союзĕн туслăх обществи тата Ют çĕршывсемпе çыхăну тытас тĕллĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри общество Китай халăхне совет музыкипе паллаштарас тата совет пьесисем тăрăх постановкăсем кăтартас ĕçсене организациллесçĕ. Китай халăхĕ совет музыкине юратса итлет, совет писателĕсен китайла куçарнă пьесисем тăрăх лартакан спектакльсене юратса пăхать. Вырăс музыкин кĕввисемпе юррисене радио тăрăх вылясa тата юрласа парасçĕ.

Китайри йывăр промышленноçра ĕçлекен рабочисен производствăри çитĕнĕвĕсем

ПЕКИН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Гуанминжибао» хаçат Китайпа Совет Союзĕн туслăх обществин деятелĕсенчен пĕри—Ся Юань çырнă статьяна пичетленĕ.

Статья авторĕ Китайри йывăр промышленноçа юсас тата малалла аталантарас ĕçре юлашки икĕ çул хушшинче паха çитĕнўсем тунине палăртать. Çак çитĕнўсене рабочисен ăнланулăхĕ ўснипе, вĕсем хастарлă ĕçленипе кăна мар, тата совет специалисчĕсем техника енĕпе пулăшса пынипе тунă, тесе çырать автор.

Совет çĕршывĕнче малта пыракансен опычĕпе усă курни ĕç тухăçлăхне чылай ўстерме тата материалсене перекетлеме май пачĕ. Çапла, хурçă шăратакан заводра Совет Союзĕнче малта пыракансен опычĕпе усă курни, технологи çĕнĕ процесĕсене пурнăçа кĕртсе пыни хурçă хăвăртрах шăратса кăларма, унăн пахалăхне лайăхлатма пулăшрĕ. Электричествăпа ĕçлекен кăмакана Совет Союзĕнчи меслетпе юсани унăн тухăçлăхне ўстерчĕ. Метала хăвăрт касмалли меслетсемпе усă курни производствăн хăличченхи нормисене пурне те иртерсе тултарма май пачĕ, тет автор.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ СТУДЕНТСЕН СОЮЗĔН СЕКРЕТАРИАЧĔ СУРÇĔР ИТАЛИРЕ СТУДЕНТСЕН ХĔЛЛЕХИ ЛАГЕРЬНЕ УÇМА ЙЫШĂННĂ

ПРАГА, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери студентсен союзĕн пичетпе информаци пайĕ çакăн çинчен пĕлтерет: Пĕтĕм тĕнчери студентсен союзĕн секретариачĕ, Италири студентсен организацийĕпе, Пĕтĕм тĕнчери студентсен союзĕн членĕ пулса тăраканскерпе пĕрле, Сурçĕр Италири Сестриерта Пĕтĕм тĕнчери студентсен союзĕн хĕллехи лагерьне уçма решени йышăннă. Çав лагере мартăн 9-мĕшĕнче уçĕççĕ.

Монголи Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕ Чойбалсан маршала ĕмĕр асăнса пурăнмалла тăвас тесе йышăннă постановлени

УЛАН-БАТОР, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Монголи Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕ Монголи халăхĕн çулпуçне, Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ пулнă Чойбалсан маршала ĕмĕр асăнса пурăнмалла тăвас тесе постановлени йышăннă.

Улан-Батор тата Алтан-Булак хулисенче, Булган аймакĕн центрĕнче—Булган поселокĕнче тата Чойбалсан аймакĕнчи Чойбалсан хулинче Чойбалсан маршал памятникне лартмалла тунă.

Министрсен Совечĕ Монголири руднике, Монголи халăхĕн революциллĕ çарĕн улттăмĕш мотомеханизированнăй бригадине, Улан-Баторти 3-мĕш хорона (хорон—хулари район.—Ред.). республикăри пионер лагерьне, государствăн Булганри хуçалăхне Чойбалсан ятне панă.

Улан-Батор хулинчи Университет урамĕн ятне улăштарса, ăна Чойбалсан урамĕ тесе ят панă.

Чойбалсан маршалăн пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе тўрремĕнех çыхăнса тăнă суртсем çине асăну хăми çапма, Улан-Баторта Чойбалсан пурнăçĕпе ĕçĕсен музейне уçма, Чойбалсан маршалăн доклачĕсене, сăмахĕсене тата статьисене пĕтĕмпех пухса пичетлевĕ кĕнекесене икĕ çул хушшинче кăларса пĕтерме, Чойбалсан маршал çинчен аса илсе çырнисенчен кĕнеке тума хатĕрлесе, ăна пичетлесе кăларма, Чойбалсан маршалăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен кăçалах ўкерчĕксемпе илемлетнĕ кĕнеке кăларма, Чойбалсан маршалăн сăнне ўкернĕ почта маркисем пичетлесе кăларма йышăннă.

Государствăн учительски институтĕнче студент-отличниксем валли Чойбалсан ячĕпе 3 стипенди тунă.

Çавăн пекех Чойбалсан маршалăн çемйине пурăнма укçа парса тăрасси çинчен постановлени йышăннă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ февралĕн 14-мĕшĕнче çапла пĕлтерет:

Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Пики самолетсене хирĕç çапăçакан салтаксем тăшманăн 2 самолетне персе ўкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсан, Хамхын тата Сукчхонь районĕсене тапăннă пулнă.

Америка самолечĕсем Корейăри мирлĕ халăх çине çаплах бомбăсем нумай пăрахаççĕ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Америка самолечĕсем Сурçĕр Корейăри хуласемпе ялсем çине çаплах бомбăсем пăрахаççĕ тата пулеметсемпе переççĕ. Çак уйăхра кăна Американ çĕрле вĕçекен бомбардировщикĕсем Нампхо районне 2 пин ытла фугаслă бомба пăрахнă. Америка самолечĕсем Янрык районне пĕрмаях, кăнтăрла та, çĕрле те тапăнаççĕ.

Американ сывлăшри вăрă-хурахĕсем Хĕрлĕ Хĕрес обществин фронтран инçетри, Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи госпиталĕ çине темиçе хутчен те бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ. Интервентсем Вонсан хули çине тата унăн тавралăхĕнчи ялсем çине тинĕсрен тупăсемпе переççĕ тата сывлăшран бомбăсем пăрахаççĕ, пулеметсемпе переççĕ.

Пхеньян районĕнче çар промышленность предприятийĕсем çук, унта çарсем те тăмаççĕ, çапах та çав район çине Америка самолечĕсем пĕрмаях бомбăсем пăрахаççĕ тата пулеметсемпе переççĕ. Çаксенчен Америка бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем Сурçĕр Корейăри хуласемпе ялсене тапăннин тĕп тĕллевĕ мирлĕ халăха хăратса ўкересси пулни курăнса тăрать. Февралĕн 13-мĕшĕнче кăнтăрла Америка истребителĕсен пĕр ушкăнĕ Пхеньянăн хĕвелтухăç енчи пайĕ çине пулеметсемпе пенĕ, çав кунах çĕрле Америка бомбардировщикĕсем халăх пурăнакан кварталсем çине тата хула çывăхĕнчи Мисанри, Камбунри тата Камхынри ялсем çине бомбăсем пăрахнă. Пхеньян хула комитечĕн алланчи туллимар сведенисем тăрăх, февраль уйăхĕнче хула çине тата унăн тавралăхĕнчи ялсем çине пĕтĕмпе 2 пин бомба ытла пăрахнă.

Америка авиацийĕ Сурçĕр Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсене тапăнса темиçе çĕр çынна, çав шутра пуриччен ытла хĕрарăмсемпе ачасене, вĕлернĕ тата амантнă.

Февралĕн 10-мĕшĕнче Америка самолечĕсем пулеметсемпе пенипе пула Кăнтăр Пхенан провинцийĕнче уй-хирте ĕçленĕ 15 хресчен вилнĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин Министрĕсен Совечĕнче

БЕРЛИН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви çакăн çинчен пĕлтерет: Демократиллĕ Германи Республикин Министрĕсен Совечĕн февралĕн 13-мĕшĕнчи чрезвычайнăй ларăвĕнче Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви СССР, США, Англи тата Франци Правительствисене чĕнсе калани яма йышăннă. Ун хыççăн Министрсен Совечĕ Бонри федеральнăй правительствăн представительне пама çакăн пек çыру йышăннă:

Германин федеральнăй республикин Бонри правительствине

Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви паян Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен, Великобританипе Сурçĕр Ирландин Пĕрлештернĕ королевствин тата Франци республикин правительствисене Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатма ыйтса Чĕнсе каланине ярса пачĕ,—çав чĕнĕве çак çырупа пĕрле ярса паратпăр.

Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви Федеральнăй республика Правительстви çав сĕнўсем, нимĕç халăхĕн шухăш-ĕмĕчĕпе тата интересĕсемпе килĕшсе тăракан сĕнўсем çумне пĕрлешессине кĕтет.

Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕ О. ГРОТЕВОЛЬ.

Берлин, 1952 çулхи февралĕн 13-мĕшĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тăватă аслă держава правительствисене чĕнсе каланине нимĕç халăхĕ ырлать

БЕРЛИН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикинчи халăх Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тăватă аслă держава правительствисене Германипе хăвăртрах мирлĕ договор тума ыйтса чĕнсе каланине ырлать. Республикăри пур вырăнсенчен те çав чĕнĕве ырлани çинчен пĕлтерекен хыпарсем пырса тăраççĕ.

Тюрингири транспорт работникĕсен профсоюзĕн правленийĕ премьер-министр Отто Гротеволь цатне янă телеграммăра çав профсоюзăн 17 пин членĕ Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе хăвăртлатас пирки панă сĕнĕве хавасланса ырлани çинчен пĕлтерет. Гера хулинчи халăхăн автомобиль юсакан предприятийĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисем Демократиллĕ Германи Республикин правительствине вăл мирлĕ договор тăвас ĕçе хăвăртлатма ыйтнăшăн тав тăваççĕ, мирлĕ договор тăвас пирки кăларса тăратнă тĕрĕс требовани пĕр шухăшлă пулса хўтĕлеме решени йышăнни çинчен пĕлтереççĕ.

«Лейна» текен хими заводĕнче (Саксони-Ангальт) ĕçлекенсен ячĕпе заводри профсоюзăн руководстви: Демократиллĕ Германи Республикин сĕнĕ утăмĕ вăл мире сыхласа хăварассишĕн тата Германирен тепĕр хут пĕр çĕршыв туса хурассишĕн тăрăшас политикăна пĕрмаях çирĕп тытса пынине кăтартса парать, тесе çырнă.

Америкăн Хĕвеланăç Германири планĕсем çинчен

ГААГА, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Де ваархейд» хаçат корреспонденчĕ Парижран пĕлтернĕ хыпарта çапла каланă: «Америкăн Хĕвеланăç Германи тĕллĕшпе хатĕрленĕ планĕсенче мĕн чухлĕ пысăк ĕçсем тума палăртни çак фактран курăнать: Американ Сурçĕр Атлантика союзĕнчи представителĕ Гарриман Франци министрĕсене Францин Бонри посолĕ пулма кама уйăрса лартасси çинчен сўтсе явнă. Ку посол Германире Францин верховнăй комиссарĕ Франсуа-Понсе вырăнне пулать. Çак ĕç çинчен лайăх пĕлекен журналистсем каланă тăрăх, Гарриман асăннă ыйтăва сўтсе явнă чухне Шуманпа Плевена Францин Бонри посолĕ пулма вăрçă вăхăтĕнче Вашингтонра пурăннă Жан Моннэ текенскерне—Шуман планне шухăшласа кăларнă çынна уйăрса лартма хушнă. Малтан Плевенпа Шуман çав кандидатурăна хирĕç пулнă. Вĕсем ку ыйтăва каярахпа йĕркелеме пулать, тенĕ. Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, Хĕвеланăç Германи территорине халĕ те ют çĕршывсем оккупациллесе тăраççĕ, унта посол яни Аденауэр правительствине пур ĕçсене те хăй тĕллĕн туса пыма право панине пĕлтерĕччĕ. Çапах та, Гарриман хытă хĕснипе, Франци министрĕсем Франци посолĕ пулма Моннэне уйăрса лартма килĕшнĕ.

Çав журналистсем пĕлтернĕ тăрăх, Моннэ çĕнĕ вырăна йышăнма килĕшнĕ. Вăл: «Францие Германи федерацине» тума пултарăп, çавна пурнăçлассине «шанса тăратăп», тесе каланă.

ЯПОНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ПАРЛАМЕНТРИ ФРАКЦИЙĔ ПОЛИЦИН РЕЗЕРВРИ КОРПУСНЕ САЛАТСА ЯМА СĔНЕТ

ТОКИО, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Японири коммунистсен партийĕн парламентри фракцийĕн «Боккай дзасхо» ятлă пичĕк хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, коммунистсен фракцийĕ парламентра сўтсе явма полицин резерври корпусне пĕтересси çинчен резолюци проекчĕ тăратнă. Çакăн пек тума сĕнни вăл Японин миршĕн тăракан пĕтĕм халăхĕн требованийĕ пулса тăрать, тесе каланă резолюци проектĕнче.

Резолюци проекчĕ çумне хушса ăнлантарса çырнинче çапла каланă: «Японин тĕнчери мĕнпур çĕршывсемпе, çав шутра Совет Союзĕпе тата Китайпа, мирлĕ пурăнмалли çулпа пымалла. Японири пĕтĕм халăх мирлĕ пурнăçшăн тăрать тата çĕршыва çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнине хирĕç, пурте çар служби́нче пулмалли йĕрке тăвассине хирĕç тăрать», тенĕ.

Япони правительстви Японири промышленниксене тĕнчери çĕршывсен Мускавра пулмалли экономика канашлăвне ярасшăн мар

ТОКИО, февралĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Токио тайме» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Япони влаçĕсем çĕршывра промышленниксемпе сутăçсен представителĕсене Мускавра тĕнчери çĕршывсен экономика ыйтăвĕсемпе пулмалли канашлăвне ярасшăн мар, влаçсем вĕсене çав канашлу ĕçне хутшăнма ан килĕшчĕр тесе хытă хистерĕç.

Хаçат çырнă тăрăх, Японири промышленниксемпе сутăçсен представителĕсем—Мурата, Китамура, Исибаси тата Кано влаçсем хистенипе парăнаççĕ, хăйсен канашлăва хутшăнмасшăн пулни çинчен пĕлтереççĕ. Хаçат вĕсен заявленийĕсене пичетлесе кăларнă. Хăйсен заявленийĕсенче вĕсем промышленниксемпе сутăçсен шухăшне палăртнă. Сăмахран, Кано çапла каланă: «Японири промышленниксемпе сутăçсен представителĕсем штаб (кунта Риджуэй штабĕ çинчен каланă.—Ред.) мĕн шутлани çине ытлашши нумай çаврăнса пăхаççĕ. Пирĕн çак принципа тытса пымалла: политика—вăл политиках пулса тăтăр, ĕç тăвасси—вăл ĕçех пултăр», тенĕ.

Испани эмигранчĕсем миршĕн кĕрешеççĕ

МОНТЕВИДЕО, февралĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Эспанья Демократика» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Испанин Америкăпа Европăри тĕрлĕ çĕршывсенче пурăнакан эмигранчĕсем хушшинче миршĕн тата пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшў тăвассишĕн кĕрешекенсен юхăмĕ вăйланса пырать.

Хаçат çапла çырать: мир вăл Франкошăн хаяр тăшман пулса тăрать. Юлашки сведенисем тăрăх, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшў тума чĕнсе калани çине Испанин эмиграцире пурăнакан 431.122 патриочĕ алă пуснă. Чĕнў çине Испанин Францире пурăнакан эмигранчĕсенчен 200 пин çын, Мексикăра—64.061 çын, Уругвайра—60 пин çын, Кубăра—44.459 çын алă пуснă.

Венăри фашистсен провокацийĕ

ВЕНА, февралĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Австрире гитлеровецсем пулнă çынсем активлă ĕçлеме тытăннă.

«Дер Абенд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 10-мĕшĕнче Венăра фашистла преступниксен пĕрлешĕвĕн пухăвĕ пулнă. Çав пĕрлешўре халăх демократи çĕршывĕсенчен тарнă фашистла преступниксем тăраççĕ, ăна—«Богемирен, Моравирен тата Силезирен хăваласа янă çынсен пĕрлешĕвĕ», тесе ят панă. Фашистла преступниксен пĕрлешĕвĕн пухăвĕнче Ганс Вагнер сăмах тухса каланă. Вăл Гейнлейн партийĕн руководителĕсенчен пĕри пулнă çын. Вагнер пухура тухса каланă сăмахра Гитлер политикине тата вăл пусарнă тĕнчери иккĕмĕш вăрçа мухтанă. Вăл, хăй нумай пулмасть Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсене кайса килни çинчен тĕплĕн каласа кăтартса, унта «нумай сенаторсемпе тата конгресс членĕсемпе тĕл пулса каласни, вĕсем пĕтĕм нимĕç халăхне пĕрлештерсе аслă Германи тăвас шухăша пĕтĕмпех ăнланса илсе ырлани» çинчен каласа панă.

Хăйĕн провокациллĕ сăмахне вĕçлесе, Вагнер «Австри çыннисенче нимĕçле шухăш-ĕмĕтсене çĕнĕрен хускатма» чĕннĕ.

Фашистсен çак провокацийĕ Австрири демократиллĕ общественноçа хытă тарăхтарнă.

Пуçа çĕклекен гитлеровецсене провокациллĕ ĕçсем тума чарас тĕллĕшпе Австрин юстици министрĕ те, шалти ĕçсен министрĕ те нимĕн те тумарĕç, тесе çырать «Дер Абенд» хаçат.

Спорт хыпарĕсем

Йĕлтĕрçĕсен кросĕ

УЛАТĂР. Хулара йĕлтĕрçĕсен Пĕтĕм Союзри кросĕ пысăк активлăхпа иртет. Февралĕн 13-мĕшĕ тĕлне хулари шкулсенче вĕренекенсем, предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсем, ирĕклĕ спорт обществин членĕсем, пурĕ 2.166 çын хутшăннă. Кроса хутшăннă комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен спорт ăсталăхне кăтартрĕç. Уйрăмах чугун çул узелĕнчи тата вăтам шкулсенчи çамрăк физкультурниксем кроса активлă хутшăнчĕç.

Кросс участникĕсем пурте тенĕ пекех ГТО значокĕн нормисене тултарнă, 118 çын Пĕтĕм Союзри спорт классификацийĕн разрядри нормисене панă.

Ăмăрту малалла пырать. Февралĕн 24-мĕшĕнче хулари ăмăрту пулса иртет. Унта комсомолецсемпе çамрăксем темиçе çĕр çын хутшăнмалла.

* * *

СОВЕТСКИ: Районта йĕлтĕрçĕсен Пĕтĕм Союзри кросне хутшăнасси кунтан-кун сарăлса пырать. Кроса уйрăмах Советскинчи, Мăн Явăшри вăтам шкулта вĕренекенсем, Хрущев ячĕпе, Ильич ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем активлă хутшăнчĕç. Кросс участникĕсен йышĕ 1.000 çынтан иртрĕ. Кросс результачĕсем тăрăх нумай физкультурниксем ГТО значокĕн нормисене тултарни паллă пулчĕ, Пĕтĕм Союзри спорт классификацийĕн тата çамрăксен разрядри нормисене тултарнисем те пур.

К. ЯКОВЛЕВ.

Эстафета пуçланчĕ

МУРКАШ. Районти физкультурăпа спорт комитечĕпе Досааф оргкомитечĕ Совет Çарĕпе Тинĕс-çар Флочĕн кунĕ ячĕпе çамрăксен йĕлтĕрлĕ эстафетине ирттерме йышăнчĕç. Эстафета çамрăксем хушшинче йĕлтĕр спортне сарас, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче Совет Çарĕпе Тинĕс-çар Флочĕ çинчен калаçусемпе докладсем ирттерес тĕллевпе пулать.

Февралĕн 7-мĕшĕнче Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсен команди Тойкилтĕри çичĕ çул вĕренмелли шкулта пулчĕ. Çула май вĕренекенсем Сталин ячĕпе тăракан колхозра пулнă, калаçусем ирттернĕ. Тойкилтĕри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсен митингĕнче пулнă хыççăн, эстафетăпа килнĕ юлташсем шкулти радиокружок мастерскойĕнче пулчĕç, вĕсен ĕç опычĕпе паллашрĕç.

Тойкилтĕри çичĕ çул вĕренмелли шкулти йĕлтĕрçĕсен команди эстафетăна Чуманкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсене пачĕ. Вĕренекенсем Токшикри пуçламăш шкулта Совет Çарĕпе Тинĕс-çар Флочĕ çинчен калаçу ирттернĕ, пирĕн мухтавлă çарăн паттăр ĕçĕсем çинчен çырнă сăвăсене вуласа панă. Радиокружок членĕсем Токшик ялĕнчи Е.Иванова колхозницăна детекторлă приемник лартса панă.

Совет Çарĕпе Тинĕс-çар Флочĕн кунĕ ячĕпе ирттерекен эстафета февралĕн 23-мĕшĕччен пырать. Çак вăхăт хушшинче эстафетăна хутшăннă вĕренекенсем районти 39 ялта Совет Çарĕ çинчен, совет халăхĕ миршĕн кĕрешни, çĕршыври коммунизмăн аслă стройкисем çинчен калаçусемпе докладсем ирттереççĕ. Февралĕн 23-мĕшĕнче Пашалукассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсен команди эстафетăна вĕçлет.

Л. СЕРГЕЕВ.

„Искра“ спорт обществинчи йĕлтĕрçĕсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ

«Искра» спорт обществинчи йĕлтĕрçĕсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне пурĕ 32 команда хутшăннă. Ăмăртура Чăваш АССР команди 6-мĕш вырăн йышăннă. Уйрăм йĕлтĕрçĕсенчен Шупашкар хулинчи паллă йĕлтĕрçĕ М. Михайлов паха тĕслĕх кăтартнă.

Пĕлтерни

Паян, февралĕн 16-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» пĕррем çул вĕренмелли кружок руководителĕсен семинарĕ пулать. Тема: «Историллĕ материализм—наука».

Семинар руководителĕ А. Ф. Сютруков юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 16-мĕшĕнче, вырăсла спектакль
«ЗА ЧЕМ ПОЙДЕШЬ, ТО И НАЙДЕШЬ»

Ыран, февралĕн 17-мĕшĕнче, кăнтăрла вырăсла спектакль
«ЗА ЧЕМ ПОЙДЕШЬ, ТО И НАЙДЕШЬ»

каçхине чăвашла спектакль
«ПУРНĂÇА ЮРАТСА»
(Юлиус Фучик)

Спектакльсем кăнтăрла 12 сехетре, каçхине 20 сехетре пуçланаççĕ.

„Родина“ кинотеатрта

Паян, февралĕн 16-мĕшĕнче, Венгрире ўкернĕ
„Колония под землей“
ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм.
Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00623 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.